**Раççей Президенчĕ Владимир Путин Федераци Пухăвне янă Çырупа паллаштарчĕ ● 4 стр.**

ХЫПАР

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

47(969) №, 2016, раштав/декабрь, 3

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

●Сăпка ăсти 2 стр.

●Хĕвеле çĕрле те курма пулать... Ăçта? 3 стр.

●Хырăмĕнчен 12,3 килограмм таякан ама тĕввине касса илнĕ хыççăн хĕрарăм ача çуратнă 5 стр.

●Качакана хуçин сумалла 8 стр.

●Упăшка алă çинче çĕклесе çӳрет 9 стр.

●Йăх ылханĕ. Икĕ чĕреллисем 11 стр.

ÇЫРĂНТАРУ-2017

**«ХЫПАРПА»**

**унăн кăларăмĕсене раштав уйăхĕн 1-10-мĕшĕсенче йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.**

«ХЫПАР» – 522 тенкĕ те 78 пус

«ХЫПАР-эрнекун» – 255 тенкĕ те 90 пус

«ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ» – 274,56 тенкĕ



**Çанталăк**

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 03.12 | –12 | – 9 |
| 04.12 | –12 | –17 |
| 05.12 | –12 | –15 |
| 06.12 | – 6 | –10 |
| 07.12 | –11 | – 5 |
| 08.12 | –20 | –18 |
| 09.12 | – 1 | –10 |

# Вăл çĕнтерме килнĕ




Андрей МИХАЙЛОВ сăнÿкерчĕкĕ.

● КСЕНИЯ РОМАНОВА АШШĔПЕ АМĂШĔН ХУШШИНЧЕ.

**"Раççей чăваш пики" конкурсăн сумĕ çуллен ӳссе пырать. Кăçал 31 пике хăйĕн юрлас-ташлас пултарулăхĕпе, ĕçченлĕхĕпе, тавракурăмĕпе, юнпа тата чунпа чăваш пулнипе жюри членĕсене, куракансене тыткăнлама тăрăшрĕ. Мурманск, Тюмень, Муравленко, Сургут, Самар, Октябрьски хулисенче, Крым, Пушкăрт, Тутар республикисенче, Чĕмпĕр облаçĕнче пурăнакан чиперккесем инçе çула кĕскетсе пирĕн тăрăха çитнĕ. Ыттисем – Чăваш Енре пурăнакансем. Сцена çинчи хитре тумланнă яштака пӳллĕ хĕрсенчен чи тивĕçлине суйласа илме çăмăл марри паллă. Вĕсен, хăнăхнă йăлапа, пилĕк конкурс витĕр тухмалла.**

Конкурса хутшăнакансене хавхалантармашкăн ЧР культура министрĕ Константин Яковлев, ЧР вĕренӳ министрĕ Юрий Исаев тата Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов килнĕ. Вĕсем чăваш хĕрĕн ăсталăхĕ, чиперлĕхĕ, ăс-тăнĕ ăруран ăрăва куçнине тата илем пурăнма хăват хушнине палăртрĕç.

Хĕрсем хăйсем çинчен каласа кăтартнинчен çакă паллă: пурте сцена пурнăçне кăмăллаççĕ, спортпа туслă, тĕрлĕ тупăшура вăйне тĕрĕслеççĕ. Çапах мĕнпе асра юлчĕç-ха конкурсантсем? Шупашкар хĕрĕсем Яна Викторовăпа Мария Васильева хăйсен пурнăçне медицинăпа çыхăнтарасшăн. Çынна пулăшасси, сыватасси тĕп вырăнта вĕсемшĕн. Чăваш наци радио итлекенсем "Ирхи кăмăл" кăларăм ертсе пыракан Мария Самделовăна /Патăрьел/ лайăх пĕлеççĕ. "Чăваш пики" конкурса иккĕмĕш хут хутшăнакан-скер хальхинче лайăхрах хатĕрленсе килнĕ. "Нарспи" сыпăка чуна витермеллерех вуларĕ. Дарья Степанова /Пушкăртстан/ та вилĕмсĕр поэма йĕркисене аса илтерчĕ.

Наталья Соловьева /Хĕрлĕ Чутай районĕ/ юрăç пуласшăн. Пĕлтĕр Пĕтĕм Раççейри "Кĕмĕл сасă" конкурсра Гран-при çĕнсе илнĕччĕ вăл. Анжелика Никифорова /Тăвай районĕ/ чăваш ташшипе куракансен кăмăлне тупрĕ. "Утрăм, чупрăм, пурпĕр тухаймарăм асамат кĕперĕ айĕнчен..." – Самартан килнĕ Татьянăпа Антонина Сашинасем юрлани çаплипех пуçран тухмасть.

Раççей кооператсi университечĕн Шупашкарти филиалĕн студентки Элпи Кошелева "Пилеш" фольклор ушкăнĕпе пĕрле сцена çине тухрĕ. Кайран юрламашкăн сăвă йĕркисене çырса юлма ыйтрĕç вĕсем.

И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн технологипе экономика факультетĕнче вĕренекен Ксения Шибаева /Йĕпреç районĕ/ "Ĕмĕрлĕх суран" калавăн пĕр сыпăкне вуларĕ. Чечен вăрçинчен таврăнайман салтак амăшĕн хуйхине кашнинех чĕре çывăхне илни иккĕлентермест. Диана Моисеева /Çĕрпӳ районĕ/ "Каçар мана, ывăлăм" сăввипе чуна хускатрĕ. Вăрçăран таврăнайман ывăлне упрайманшăн ĕмĕрĕпех куççуль тăкать чун панă амăшĕ.

# Сăпка ăсти



**«Ăста епле, ĕçĕ те çапла» тенĕ ваттисем. 65 çул каялла Атăльялта карçинкка çыхакансен артелĕ пурччĕ. Евгения Яранцева, Валентина Портнова, Анастасия Яранцева, Вера Антонова, Олимпия Виноградова, Раиса Андреева вăй хуратчĕç унта. Шел те, иккĕшĕ çеç пурăнаççĕ паян: Олимпия Виноградовăпа Раиса Андреева. Артель çурчĕ те çук.**

Раиса Андреева халĕ те тĕрлĕрен карçинкка çыхать. Чи тĕлĕнмелли – вăл шурă хулăран ача сăпки те çыхма пултарать иккен. Мана аннепе кукамай сиктерсе ӳстернĕ сăпкана халĕ те хаклă япалана упранă пек усратăп. Çавăн пеккинех вĕр çĕннине Раиса Андреева кăларса лартсан куç сисмесĕрех шывланчĕ. Калаçнăçемĕн манăн 50 çул каяллахи сăпкана та вăлах çыхни палăрчĕ.

Раиса Григорьевна 1936 çулхи кăрлач уйăхĕн 3-мĕшĕнче Атăльялта çуралнă. Григорий Никитичпа Татьяна Капитонова 5 ача: Иван, Николай, Анатолий, Раиса, Петĕр – ӳстернĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах ашшĕ, унтан Иванпа Николай ял-йышпа, тăванĕсемпе сывпуллашса вăрçă хирне тухса кайнă. Григорий Андреев вăрçа каяс умĕн мăшăрĕпе ачисене: «Вутă пулмасан сарай сӳтсе кăмака хутăр, килсен тăватпăр», – тенĕ. Анчах Григорий Никитичпа ывăлĕ Николай юнлă вăрçă хирĕнчен таврăнайман. Районти Асăну кĕнеки çинче: «Григорий Андреев рядовой, 1896 çулта Атăльял ялĕнче çуралнă. 1945 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче вилнĕ, Хĕвелтухăç Пруссире Мариендвер ялĕ çывăхĕнче пытарнă, 9-мĕш номерлĕ вилтăпри», – тесе çырнă. Юнашарах «Николай Андреев рядовой, 1924 çулта Атăльял ялĕнче çуралнă. 1943 çулхи кăрлачăн 29-мĕшĕнче вилнĕ, Сталинград хулинче пытарнă», – тесе палăртнă. Иван вăрçăран таврăнсан авланнă, анчах нумаях пурăнайман, унăн ача пулман. Андреевсен ячĕсем Атăльялти Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче паттăррăн çапăçнă ентешсене халалласа лартнă «Мăнаçлă салтак» палăк çумĕнчи асăну хăми çине ĕмĕрлĕхех çырăнса юлнă.

«1951 çулхи авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче, Кипечкассинчи 7 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Валентина Одюковăпа карçинкка артельне ĕçе вырнаçма кайрăмăр. Пире «Богатырь» колхоз председателĕ Михаил Семеновпа Аверкий Калегин бригадир тытса чарчĕç, артеле ярасшăн пулмарĕç. Унччен эпир колхозра кĕлтесем турттарнăччĕ. Валькăпа иксĕмĕр карта хыçĕпе тартăмăр. Карçинкка çыхма Атăльялти Ольга Романова вĕрентрĕ. 2 çул симĕс хулăпа ĕçлерĕмĕр. Евгенияпа Анастасия Яранцевăсем мана шурă хулăран 2 авăрлă карçинкка, сăпка, хыçалтан тĕксе çӳремелли ачасен çунашкине явма вĕрентрĕç. Артеле вăл вăхăтра Хорнсорти фронтовик Андрей Олангин ертсе пыратчĕ, унăн хăрах алли ĕçлеместчĕ. Бригадирĕ те Хорнсорти фронтовик Иван Плотниковчĕ. Артельте Атăльялтан Ольга Романова, Валентина Одюкова, Вера Ходяшова, Валентина Портнова, Клавдия Яковлева /шăллĕ Геннадий Яковлев, ĕçлеме унран вĕренсе юлнăскер, уявсене халĕ те карçинккасемпе тухать/ пулнă. Кипечкассинчен Олимпия Виноградова, Вера Чугунова, Иван Чугунов, Николай Виноградов, Хорнсорсем Зоя Плотникова, Екатерина Плотникова пурччĕ. Ирпе 7 сехетченех ĕçе тытăнаттăмăр. Атăл хĕрринчи пӳртре Иван Никитич ертсе пынипе симĕс хулăран карçинккасем яваттăмăр. Кунне кашнин 8 карçинкка çыхмаллаччĕ. Çулла хатĕрленĕ шурă хулăран Андрей Павлович ертсе пынипе кунне 3 сăпка ăсталаттăмăр. Хатĕр япаласене Шупашкара тиесе каятчĕç», – аса илчĕ сăпка ăсти Раиса Андреева.

Хĕрарăм карçинкка артелĕнче 20 çул ĕçленĕ. Каярах Шупашкарти электроаппарат заводĕнче комплектовщикре 21 çул тăрăшнă. Унтан 4 çул лавккара тирпейлӳçĕ пулнă. Пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ – 46 çул. Вăл «Ĕç ветеранĕ» ята тата нумай Хисеп хутне тивĕçнĕ. Раиса Григорьевна тивĕçлĕ канăва тухнăранпа ялта, пиччĕшĕн Анатолийĕн ывăлĕн Володьăн çемйипе килĕштерсе пурăнать.

Кипечкассинчи Олимпиада Виноградова артельте 1949 çулхи раштав уйăхĕнчен пуçласа 1958 çулхи кăрлаччен, каччă кайиччен ĕçленĕ. 84 çултискер халĕ те карçинкка çыхать. Кашни ялтах илемлĕ сăпка çыхакан пулсассăн ача та нумайланассăн туйăнать...

**Николай СМИРНОВ.**
Шупашкар районĕ.

*РАÇÇЕЙ ЧĂВАШ ПИКИ*

# Вăл çĕнтерме килнĕ

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш. стр./**

Мурманск чăвашĕсен чысне хӳтĕлекен Екатерина Иванова Иван мучие çаврăнса пулăшуçисемпе пĕрле тăла тунине сăнларĕ. Марина Кудряшова /Тутарстан/ шуйттансене çĕнтернине выляса кăтартрĕ. Чăнах, ырри яланах çиеле тухать. Нелли Львова /Элĕк районĕ/ усал вăйсене пулах уйăх çинчи пикене çаврăнчĕ. Людмила Мушкарева /Куславкка районĕ/ "Смолин вулавĕсене" республика шайĕнче irttерме пуçланине палăртрĕ, Анатолий Смолинăн сăввине пăхмасăр каларĕ.

Ксения Сергеева /Крым/ анне çинчен юрă шăрантарчĕ. Василиса Жигулева /Сургут/ купăспа ташларĕ, анчах темшĕн ăна тăсса кĕвĕ каламарĕ. 16 çула пуснă Татьяна Ястребова /Етĕрне/ ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ. Тантăшĕсемпе пĕрле чăвашăн авалхи йăли-йĕркине кăтартрĕ вăл. Малашне палăрмашкăн ĕлкĕрĕ-ха çамрăк. Чăваш тата Инди культурипе кăсăкланакан Анна Юнкерова /Шупашкар/ Инди ташшипе куракансене тыткăнларĕ.

Ытти чухне ăс-тăна тĕрĕслекен конкурс "такăнтаратчĕ" хĕрсене. Те çухалса кайнăран, те пĕлменрен ыйтусене йăнăш хуравлатчĕç вĕсем. Хальхинче чаршав хыçĕнче чăвашлăхпа çыхăннă кĕнеке-словарь вуласа тăнă пулинех чиперккесем. Ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмах тупсăмне, символ авторĕсене, йăла-йĕркене... тĕрĕсех пĕлчĕç. Республика тулашĕнчен килнĕ пĕр пикене чăвашла ăнланманни ура хучĕ. Ыйтăва вырăсла куçарма ыйтрĕ вăл. Апла пулин те салтака ăсатакан çамрăка мĕншĕн хĕресле алшăлли çыхнине калаймарĕ, Чăваш Ен Пуçлăхĕн ятне пăтраштарчĕ. Тата çул çинчи "пробкăна" чăвашла "пăкка" çавăраймарĕ пĕр пике.

"Ик хуртан тунă, виç хуртан тунă хуплуне касса пăхсамăр, çисе пăхсамăр..." – сцена çине юрласа тухрĕç хĕрсем. Çирĕм ытла хуплăва тутанса хак пачĕç жюри членĕсем. Нумайăшĕ сăра вĕретсе килнĕ. Пĕртăван Сашинасем, тĕслĕхрен, шарккупа, шăрттанпа, çавра çăкăрпа хăналарĕç. Мурманскран килнĕ Екатерина Иванова шӳрпе, юнтултармăшĕ тата пăлан какайĕ тутанса пăхма сĕнчĕ. Шупашкар районĕнчи Анастасия Волкова какай шӳрпи, хуран кукли, чăкăт пĕçерсе килме ӳркенмен. Василиса Жигулева ĕлĕкхи йăлапа кавăнпа вир пăтти хатĕрленĕ. Пӳремеч те, студень те, тăвара та /чăкăт/ тутлă пиçсе тухнă-тăр.

"Эпĕ çĕнтерме килнĕ кунта", – пурте илтмелле каларĕ Тутарстан пики Ксения Романова. Апла тăк вăл хăйĕн вăйне ĕненет. Çавăнпа пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен ăна сăнарăм. Тем тесен те конкурсра хăйне евĕрлĕхпе хисеп çĕнсе илмелле. Вăл чечек ăсталаса кăтартрĕ. Хăй тĕпленнĕ тăрăхра чăвашсемпе тутарсем туслă пурăннине каларĕ. Çавăнпах чак-чак тата пĕлĕм илсе килнĕ пике. Пĕлĕм чăваш апачĕ пулнине ĕнентерме тăрăшрĕ Ксения. "Шала мĕн хунине пĕлмен-и?" – кăсăкланнă пĕри. "Пĕлмен çав", – хуравланă тепри. Шăпах çапла пулса кайнă-мĕн "пĕлĕм". Тутарстанран килнĕскер федераци университетĕнче пĕлӳ илет. Университет сиада ялĕнче хисеплеççĕ ăна. Хĕр чăваш çамрăкĕсемпе пĕрле "Аталан" ушкăн йĕркеленине те палăртса хăвармалла. Çĕнтерме килнĕскер Пĕтĕм Раççейри "Чăваш пики – 2016" конкурсра мала тухрĕ, Крыма канма каймалли путевкăна тивĕçрĕ.

Пушкăртстан хĕрĕ Елена Садыкова "Вице-чăваш пики" ят çĕнсе илчĕ. Ксения Сергеева /Крым/ – "Чи хӳхĕм пике", Мила Яковлева /Канаш районĕ/ – "Куракансем кăмăлланă пике", Нелли Львова /Элĕк районĕ/ – "Чи çепĕç пике", Дарья Степанова /Пушкăртстан/ – "Чи ăслă пике", Ангелина Адамовăпа /Чĕмпĕр/ Екатерина Сафронова /Муравленко хули/ "Чăваш Ен тулашĕнчи чи пултаруллă пике" номинацисенче мала тухрĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Александр ВРАЖКИН сăнӳкерчĕкĕ.





# Владимир ПУТИН:
# Раççей пирĕн – пĕрре

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин ĕнер Кремль керменĕн Георгий залĕнче хăйĕн Федераци Пухăвне янă çулленхи Çырăвĕпе паллаштарчĕ. Раççейĕн çĕнĕ историйĕнче çакă – 13-мĕш Çыру. Ăна итлеме Федераци Канашĕн членĕсем, Патшалăх Думин депутачĕсем, çĕршывăн ĕç тăвакан влаç органĕсен ертÿçисем, кĕпĕрнаттăрсем, общество ĕçченĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем пухăннă. Пĕр сехет те вунă минута тăсăлнă сăмахĕнче Президент çĕршывăн шалти тата тулашри политикин ыйтăвĕсене тишкерчĕ, социаллă пурнăçпа экономика лару-тăрăвне хакларĕ, умри тĕллевсене палăртрĕ.**

**Вулакана Çырăвăн чи пĕлтерĕшлĕ сыпăкĕсемпе кĕскен паллаштаратпăр.**

* * *

Юлашки вăхăтра эпир анархи валли çул уçнă сахал мар çĕршыва куратпăр. Кăтартăвĕ пур çĕрте те пĕрре: çынсем нуша кураççĕ, пĕтĕмпех арканать, шанăç çухалать. Çакă Европăри тата ытти çĕрти çĕршывсене пырса тивнĕ миграци кризисĕпе пушшех çивĕчленет. Шел те, кисренÿ иртнĕ ĕмĕрте пирĕн çĕршывра та сахал мар пулнă.

2017 çулта Февральти тата Октябрьти революцисем пулнăранпа 100 çул çитет. Ку Раççейри революци сăлтавĕсене тишкерме хистет. Çакă – пирĕн пĕрлехи истори. Ăна хисеплемелле. Истори урокĕсем пире чи малтан çураçма, килĕшÿе çирĕплетме кирлĕ. Унччен хирĕçÿпе кÿренĕве паянхи пурнăçа илсе килме юрамасть. Асра тытар: эпир – пĕр халăх, Раççей те пирĕн пĕрре.

* * *

Пирĕн политикăн пĕлтерĕшĕ – çынсене упраси, Раççейĕн тĕп пуянлăхĕ вырăнне хурса çын капиталне ÿстересси. Çавăнпа йăлана кĕнĕ хаклăхсене, çемьене, демографи программисене тĕревлессине, экологие, çынсен сывлăхне лайăхлатассине, вĕрентÿпе культурăна аталантарассине тĕпе хуратпăр.

Халăх йышĕ хăй тĕллĕн ÿссесси малалла пырать. Демографсен «ача çуратасси» текен ăнлав пур, вăл 2013 çулта Раççейре 1,7-пе танлашнă – Европăри чылай çĕршывринчен пысăкрах. Португалире 1,2 пулнă, Испанире, Грецире – 1,3... 2015 çулта Раççейре ача çуратассин пĕрлехи коэффициенчĕ тата кăшт пысăкрах пулать – 1,78.

Социаллă сферăри улшăнусене малалла тăсăпăр – вăл çынсене, вĕсен нушисене çывăхрах пултăр. Унта талантлă çамрăксем те ĕçлеччĕр, çавăнпа специалистсен шалăвне ÿстеретпĕр, вĕсен ĕç условийĕсене лайăхлататпăр.

Пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕ вуçех пулман. Хальçавнашкал центрсем – 94. 2015 çул кăтартăвĕсем тăрăх Раççейре тин çуралнă ачасем вилесси 1 пин ача пуçне 6,5-пе танлашнă. Европăра 6,6 пулнă – пирĕн кăшт лайăхрах. Кăçалхи вунă уйăх кăтартăвĕсемпе вара Раççей 5,9 кăтарту шайне тухнă. Юлашки вунă çулта пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕн калăпăшĕ 15 хут ÿснĕ. Паян федераци центрĕсенче кăна мар, регионсенчи клиникăсенче те пин-пин операци тăваççĕ.

Сывлăх сыхлавĕнче çивĕч ыйту нумай-ха. Граждансем черетсене те, кăнттамлăха та кураççĕ. Врачсен ĕç калăпăшĕ пысăк, кирлĕ специалист патне кĕме йывăр. Тепĕр чухне поликлиникăсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтернĕ, анчах ĕçлекенсен унпа усă курма квалификаци çитмест. Çавăнпа та çитес çултан медицина центрĕсемпе вузсен никĕсĕ çинче врачсене вăхăт иртнĕ май çĕнĕрен хатĕрлессине пуçарăпăр.

* * *

Пысăк çĕршывăмăрта ачасен хăтлă та меллĕ условисенче вĕренмелле. Юхăннă, авари пулма пултаракан шкул çурчĕсем юлмалла мар. Виççĕмĕш сменăсен, каярахпа иккĕмĕш сменăсен ыйтăвне татса памалла. Вĕрентекенсен квалификацине ÿстерес енĕпе ĕçлемелле. 2016 çултанпа пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан организацисенче çĕнĕ вырăнсем йĕркелемелли программăна пурнăçлатпăр. 2016-2025 çулсенче ун валли 25 миллиард тенкĕ уйăрма палăртнă. 2019 çулччен шкулсенче çĕнĕ 188 пине яхăн вырăн йĕркелемелле.

* * *

Çитес çул хăтлăхпа тирпейлĕх программисем валли регионсене 20 миллиард тенкĕ парăпăр. 2017 çул – Экологи çулталăкĕ. Правительствăна Раççейĕн хайнеевĕрлĕ çут çанталăк символĕсене – Атăла, Байкала, Алтая – упраса хăвармалли программăсем хатĕрлеме хушатăп. Çĕршывĕпех варалнă лаптăксене тасатмалла. Ку ыйту пысăк хуласемшĕн кăна мар, ялсемпе поселоксемшĕн те çивĕч.

* * *

Икĕ çул каялла экономикăри лару-тăру çивĕчленчĕ – тĕнче рынокĕсенчи конъюнктура япăхланчĕ, хамăрăн наци интересĕсем çине алă систарса пире санкцисен кĕввипе ташлаттарасшăнччĕ. Çапах экономика такăннин тĕп сăлтавĕсем чи малтанах хамăрăн шалти çивĕч ыйтусемпе сăлтавланнă. Çав шутра – инвестици ресурсĕсен, çĕнĕ технологисен, кадрсен дефицичĕ, конкуренци аталанманни, ĕçлĕ климат çитменлĕхĕсем. Хальхи экономика чакма пăрахрĕ, промышленноçра кăшт ÿсĕм те пур. Пĕлтĕр ВВП 3,7% чакнăччĕ, кăçалхи вунă уйăхра вара вăл 0,3% танлашнă – çулталăкĕпе çапларах пулать пуль.

Промышленноçăн чылай отраслне, çурт-йĕр рынокне тĕревлемелли программăсем пулăшрĕç. 2015 çулта пурăнмалли 85 миллион тăваткал метр ытла çурт-йĕр хута янă – çĕршыв историйĕнчи рекорд.

Макроэкономика çирĕплĕхне тивĕçтертĕмĕр, финанс резервĕсене упраса хăвартăмăр. Тĕп банкăн ылтăнпа валюта резервĕ пысăкланнă – 400 миллиард доллара яхăн. Çулталăк кăтартăвĕсем тăрăх инфляци палăрмаллах чакасса кĕтетпĕр – 6% пĕчĕкрех пулĕ. Астăватăр пуль: 2015 çулта инфляци 12,9% пулнăччĕ. Чи пĕчĕк инфляци вара 2011 çулта пулнă – 6,1%. Кăçал вăл тата пĕчĕкрех пулма пултарать, апла тăк çитес çул тĕллев шайĕнчи 4% таран пĕчĕклетме пултаратпăр. Çакă сывă экономика никĕсĕ çинче палăрмаллах ÿсме май парас шанăç пур.

* * *

Çапах тăнăçлăх килни ÿсĕм хăй тĕллĕн пуласса пĕлтермест. Тĕллевсене усăмлăн палăртмалла, вĕсене çине тăрса пурнăçламалла. Хăй вăхăтĕнче ял хуçалăхĕн çивĕч ыйтăвĕсем яланлăхах пек туйăнатчĕç. Ял хуçалăхĕ пирки темле хура шăтăк вырăнне хурса калаçатчĕç: хуть те мĕн чухлĕ укçа пар – пурпĕр кăтарту пулмĕ. Анчах пĕтĕмпех урăхларах йĕркелеме пулать иккен. Тивĕçлĕ йышăнусем тупрăмăр, ял хуçалăхне пулăшмалли система туса хутăмăр, çавна май паян АПК – çĕршыва тăрантаракан, тĕнче рынокне тухакан ăнăçлă отрасль.

Çакăнта пирĕн ĕçтешсем санкцисемпе усă курни те пулăшрĕ – эпир хирĕç мерăсем йышăнтăмăр. Ял хуçалăхне пулăшрăмăр. Анчах çакă ĕмĕрлĕх маррине те манма юрамасть, потребителе те рынокри конкуренци кирлĕ, çавăнпа паянхи ырă лару-тăрупа туллин усă курма юлмалла.

Ял хуçалăх продукцийĕн экспорчĕ паян пире хĕç-пăшал сутнинчен те пысăкрах тупăш парать. Сăмахран, хĕç-пăшал экспорчĕ тĕлĕшпе те пирĕн позицисем çирĕп: 2015 çулта тулашри рынокра 14,5 миллиард тенкĕлĕх сутнă. Ял хуçалăх продукцийĕ вара – 16,2 миллиардлăх. Кăçал ытларах пуласса шанатпăр – 16,9 пулать-тĕр. Куншăн ял хуçалăх ĕçченĕсене тав тăвар.

* * *

Правительствăн çитес çулхи çу уйăхĕнчен кая юлмасăр 2025 çулччен пурнăçламалли план хатĕрлемелле, ăна пурнăçлани 2019-2020 çулсен чиккинчех экономика ÿсĕмĕн тĕнчери шайран пысăкрах хăвăртлăхне тÿрре кăларма май памалла. 2014 çулта эпир бизнес валли налук условийĕсене тăватă çуллăха çирĕплетрĕмĕр. Вĕсене улăштармарăмăр, çакă предприятисен ĕçне ырă витĕм кÿчĕ. Çитес çул налук тытăмне йĕркелемелли сĕнÿсене тĕплĕн тишкермелле, саккунсене, Налук кодексне тÿрлетÿсем кĕртмелле, вĕсем 2019 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕччĕр – вăрахлăх çирĕп правилăсем пулччăр.

Эпир тĕрĕслевпе надзор органĕсен ĕçне лайăхлатмалли пирки чылай çул калаçатпăр. Çитес çултан вĕсем тĕпĕ-йĕрĕпе усă пулĕç: кам кама тĕрĕслет, тĕрĕслев кăтартăвĕсем мĕнлерех. Çакă тĕрĕслевçĕсем предпринимательсен прависене пăснин кашни тĕслĕхĕпе мерăсем йышăнма май парĕ. Правительствăн тĕрĕслевсен шутне чакарас, вĕсен уссине ÿстерес тĕллевлĕ ĕçе хăвăртлатмалла. Надзор органĕсем йĕркене пăснине тупса палăртни çителĕксĕр, профилактика енĕпе ĕçлемелле, предпринимательсене консультаци парса пулăшмалла.

Хăйсем тĕллĕн ĕçлекен граждансем пирки саккунсăр предпринимательлĕх темешкĕн пăрахма хушрăм ĕнтĕ. Вĕсене сăлтавсăр çулăхма пăрахмалла. Унашкалли ан пултăр тесен хăйсем тĕллĕн ĕçлекен граждансен право статусне уççăн çирĕплетмелле – лăпкăн ĕçлеме пултарччăр.

Коррупципе кĕрешессипе çыхăннă тема çинче уйрăммăн чарăнса тăрам. Юлашки çулсенче муниципалитет, регион, федераци шайĕнчи чиновниксемпе çыхăннă шавлă ĕç чылай пулчĕ. Патшалăх служащийĕсен тĕп йышĕ – тÿрĕ кăмăллă çынсем. Анчах таса мар аллăллă влаç представителĕсене должноçсем те, çÿллĕ шайри çыхăнусем те, унченхи тава тивĕçлĕ ĕçсем те хÿтĕлеймĕç. Çав вăхăтрах суд йышăну тăвиччен çын айăпли е айăпсăрри пирки никамăн та вердикт палăртма право çук.

Тепĕр самант. Резонанслă тĕслĕхсем пирки шăв-шав çĕклесси йăлана кĕчĕ. Ку енĕпе чылай чухне следстви, право хуралĕн органĕсен представителĕсем хăйсем çылăхлă. Коррупципе кĕрешесси – шоу мар, кунта профессионализм, яваплăх кирлĕ.

* * *

Инфляци чакни банксен кредичĕсене йÿнетмелли объективлă условисем çуратать. 2015-2016 çулсенче эпир банк системин капиталне 827 миллиард тенкĕлĕх пуянлатрăмăр. Çак ресурс банксем экономика валли кредит уйăрассине пысăклатма пулăшрĕ. Апла пулин те çавнашкал кредитсен калăпăшĕ кăçал кăшт чакнă. Нумай çĕршывра банксен финанс секторĕ ăнăçлă ĕçлет. Ăна пирĕн те аталантармалла, вăл инвесторсен, граждансен укçине облигацисем, ытти механизм урлă явăçтарма май парать.

Пĕчĕк бизнеса кредитсемпе пулăшни пысăк пĕлтерĕшлĕ – ку виçе те малашне чакать-ха. Регионсенчи пысăк мар банксем ансатлатнă требованисемпе ĕçлеме пултарччăр – çапла тума пулать.

Экономикăна çĕнĕ шая çĕклемешкĕн çĕнĕ йышши технологисемпе çыхăннă çул-йĕрсем çине пусăм тумалла. Технологи тĕлĕшпе çĕнĕ ăрури экономика аталанăвĕн анлă программине хута яма сĕнетĕп. Çак проектсене финанс ресурсĕсемпе тивĕçтермелле, пире квалификациллĕ кадрсем кирлĕ пулĕç. Инженерсене, IT-специалистсене тÿлевсĕр хатĕрлемелли вырăнсен шутне пысăклатăпăр. Тĕп вузсенче, çав шутра регионсенчи аслă шкулсенче компетенци центрĕсем йĕркелĕпĕр.

Хамăрăн талантлă çамрăк ученăйсене пулăшни пысăк пĕлтерĕшлĕ, вĕсем Раççейре хăйсен тĕпчев командисене, лабораторийĕсене йĕркелеччĕр.

* * *

Юлашки çулсенче пире тулашран витĕм кÿме тăнине куратпăр. Çав шутра – Раççей агрессийĕ пирки калакан халапсем те, пирĕн спортсменсене, çав шутра паралимпиецсене тапăнни те. Саккаса йĕркелекен информаци кампанийĕсем, компроматсем, мăнна хурса вĕрентме хăтланнисем йăлăхтарса çитерчĕç. Кирлĕ тĕк эпир хамăр кирек кама та ăс пама пултаратпăр. Анчах эпир хамăрăн яваплăха туятпăр, тĕнче тата регионсен шайĕнчи çивĕч ыйтусене татса пама хутшăнмашкăн хатĕр.

Эпир никампа та хирĕçесшĕн мар. Тăшман шырамастпăр, пире туссем кирлĕ. Анчах пирĕн интерессене хĕстерни çырлахмăпăр. Эпир хамăрăн шăпана хамăрах татса парасшăн. XXI ĕмĕрти тĕнчери хутшăнусен çирĕп тытăмне йĕркелес енĕпе тĕллĕн калаçма хатĕр. Шел те, ку енĕпе сивĕ вăрçă хыççăнхи вунăçуллăхсем сая кайрĕç.

Паянхи ансат мар условисенче Раççейпе Китайăн анлă ĕçтешлĕхĕ тĕнчери тăнăçлăха тивĕçтермелли тĕп факторсенчен пĕри пулса тăчĕ. Раççейĕн тулашри политикин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри – Индипе стратеги ĕçтешлĕхне çирĕплетни. Японипе тытакан хутшăнусем те лайăхланасса шанатпăр. Америкăн çĕнĕ администрацийĕпе те алла-аллăн ĕçлеме хатĕр.

Юлашки çулсенче пире çăмăл килмерĕ, анчах çак тĕрĕслевсем пире татах та вăйлатрĕç. Йывăрлăхсене çĕнтернĕ май эпир малалла каймалли никĕсе йĕркелерĕмĕр. Çĕршывăн пуласлăхĕ пирĕнтен кăна, çĕршывăн мĕнпур гражданинĕн ĕçĕпе талантĕнчен, вĕсен яваплăхĕпе ăнăçăвĕнчен килет. Эпир хамăр умри паянхи тата ыранхи тĕллевсене пурнăçлатпăрах.

ХӖРАРӐМ СЫВЛӐХӖ

# Пурнӑҫ ҫулӗпе асамлӑха ӗненсе утмалла

**Иртнӗ эрнере пирӗн республикӑна Мускаври патшалӑх медицинӑпа стоматологи университетчӗн диплом хыҫҫӑнхи вӗренӳ факультечӗн репродуктивлӑ медицинӑпа хирурги кафедрин заведующийӗ, Раҫҫей Сывлӑх сыхлав министерствин акушерствӑпа гинекологин штатра тӑман специалисчӗ, Раҫҫей наукӑсен академийӗн академикӗ Лейла Адамян хӑйӗн ӗҫтешӗсемпе килсе ҫитрӗ. Унӑн ыркӑмӑллӑх фончӗн "Уҫӑ университет" проекчӗпе килӗшӳллӗн иртекен "Хӗрарӑм сывлӑхӗ: ҫие юлнинчен пуҫласа ватлӑх таран" ӑслӑлӑх-практика конференцийӗнче сывлӑх сыхлавҫисем паянхи чи пӗлтерӗшлӗ ыйтусем тавра калаҫрӗҫ. Ҫак тӗлпулӑва Чӑваш Енри хӗрарӑмсен союзӗ пулӑшнипе йӗркеленӗ.**

**Ку ӗҫе республика Пуҫлӑхӗпе Михаил Игнатьевпа унӑн мӑшӑрӗ Лариса Юрьевна хутшӑнчӗҫ.**



## Ашшӗ-амӑшӗ те, тухтӑрсем те яваплӑ

Республикӑри ачасен ырлӑхӗшӗн, телейлӗ малашлӑхӗшӗн медицина ӗҫченӗсем те, ашшӗ-амӑшӗ те хӑйсенчен мӗн килнине йӑлтах пурнӑҫланине палӑртрӗ Михаил Васильевич.

"Пирӗн тӗллев – пур пепкене те хӑйӗнни пекех юратакан воспитательсем, вӗрентекенсем хатӗрлесси. Ачасене ҫитӗнмешкӗн, аталанмашкӑн хӑтлӑрах условисем туса парӑпӑр. Вӗсене тӑван ҫӗршыва юратма, ҫынсене хисеплеме, пӗр-пӗрне пулӑшма вӗрентмелле", – терӗ вӑл. Ҫавнашкалах Правительство умне экономикӑна аталантармалли, ҫынсен пурнӑҫне лайӑхлатмалли, ӗҫ укҫин виҫине пысӑклатмалли тӗллевсем лартни ҫинчен каларӗ республика Пуҫлӑхӗ.

Лейла Адамян Михаил Васильевича амӑшӗсене ывӑлӗ пек сума сунӑшӑн, ҫамрӑксене ашшӗ пек юратнӑшӑн, хӗрарӑмсене чӑн-чӑн арҫын пек хисепленӗшӗн тав турӗ. Чӑваш Енре ҫемье пӗлтерӗшне пысӑка хунине пӗлет хӑна, ҫавӑнпа пирӗн тӑрӑха суйласа илнӗ те вӗсем.

"Хӑш-пӗр хӗрарӑм гинеколог пӳлӗмне, ача ҫуратмалли ҫурта сисчӗвленсе кӗрет. Шӑпах ҫакнашкал проект ӑна хитре, сывлӑхлӑ пулма, чир-чӗре сӗнтерме пулӑшӗ", – палӑртрӗ ЧР сывлӑх сыхлав министрӗ Алла Самойлова.

## Ҫемье чирӗ

"Статистикӑна пӑхас тӑк – вӑрӑм ӗмӗрлӗ ҫынсенчен ытларахӑшӗ – хӗрарӑм. Ҫавӑнпа арҫынсене упрама чӗнсе калас килет, мӗншӗн тесен пӗччен ҫынна пурнӑҫ ҫулӗпе утса тухмашкӑн йывӑр.

Юлашки ҫулсенчи кӑтартӑва тишкерес пулсан ҫакна каламалла: кризиза, санкцисене, экономикӑри йывӑрлӑха пӑхмасӑрах ача ҫуратакансен йышӗ пысӑкланнӑ, пӗчӗк ача вилнӗ тӗслӗх сахалланнӑ. Ҫав вӑхӑтрах хӗрарӑмсене нушалатаракан чир-чӗр парӑнасшӑн мар", – сӑмах илчӗ Лейла Владимировна.

Амалӑх миоми ҫинче чарӑнса тӑчӗ вӑл. Ку – ача ҫуратма пултаракан кашни виҫҫӗмӗш хӗрарӑмӑн чирӗ. Ҫав тӗвӗ амалӑха сиенлет. Гинекологи операцийӗсен 80 процентӗ шӑпах миомӑпа ҫыхӑннӑ. Амалӑхри тӗвӗ хӑш тӗлте вырнаҫине кура гинеколог сиплев мелне палӑртать. Тӗвӗ аталанса пыни вара амалӑха касса илмелли патнех ҫитерет.

Ҫапах мӗншӗн миома ҫемье чирне ҫаврӑннӑ? Кукамӑшне те, амӑшне те, хӗрне те ҫав тӗвӗ канӑҫ памасть. Лейла Адамян йӑх чирӗсемпе кӑсӑкланмалли, малашлӑхра мӗнле чӑрмавсем кӗтнине пӗлмелли ҫинчен калать. Паянхи медицина профилактика енӗпе ӑнӑҫлӑ ӗҫлет.

Ӗлӗкрех, ҫын тӑватӑ уран ҫӳренӗ чухне, хӗрарӑмсем амалӑх миомипе нушаланман. Кайран тин, икӗ ура ҫине тӑрсан, ку чир вӑй илме пуҫланӑ. Ҫакна юн ҫаврӑнӑшӗ пӑсӑлнипе те сӑлтавлама пулать. Афроамерика хӗрарӑмӗсем, ытти расӑпа танлаштарсан, амалӑх миомипе 2-3 хут ытларах чирленине палӑртнӑ. Уйӑх хушши час пуҫланни, юн вӑйлӑ юхни – сисчӗвлентерекен пулӑмсем. Хӗрлӗ какай, хӗрлӗ эрех юратакансен те амалӑх миоми аталанас хӑрушлӑх пур.

Юн вӑйлӑ кайсан, ыратсан, ар органӗ шыҫсан, паллах, гинекологран пулӑшу ыйтмалла. Хальхи ҫӗнӗ йышши технологисен витӗмӗпе чире ҫийӗнчех тупса палӑртӗҫ. Сӑмах май, миомӑллӑ хӗрарӑма ЭКО программине хутшӑнтармаҫҫӗ, мӗншӗн тесен аталанакан пепкене унӑн варӗнче хӑтлӑ пулмӗ.

"Амалӑхри ҫав тӗвӗ хӗрарӑма йӗркеллӗ пурӑнма чӑрмантарать. Акӑ нумаях пулмасть ятарлӑ кӑларӑмри тӳрӗ эфирта 15 минутра операци турӑм. Ҫав хӗрарӑм 3 ҫул тухтӑрсем патне ҫӳренӗ, вӗсене укҫа тӳленӗ, тӗрӗсленнӗ, пӑшӑрханнӑ. Нимрен те хӑрамалла мар. Амалӑх миоми ача ҫуратма ан чӑрмантартӑр", – ӑнлантарать Раҫҫей тӗп гинекологӗ.

Сывлӑх сыхлавҫи хӗрарӑма операци сӗтелӗ ҫине вырттариччен, сиплев палӑртиччен унӑн ӳсӗмне, тӗвӗ пысӑкӑшне шута илет. Ҫӗнӗ технологисем пулӑшнипе, паллах, органа сыхласа хӑварма тӑрӑшать.

Лейла Владимировна 12 килограмм та 300 грамм таякан миомӑран хӑтӑлнӑ тӗслӗх илсе кӑтартрӗ. Ҫав хӗрарӑмӑн амалӑхне сыхласа хӑварма май килнӗ. Султалӑк ҫурӑран ача ҫуратнӑ вӑл. Ҫакна илтсен залри халӑх тӑвӑллӑн алӑ ҫупрӗ.

## Ача тӗвӗленеймест, хырӑм ӳкет

Хӗсӗрлӗх тата вӗче шӑмми тӗлӗнче ыратни эндометриозпа ҫыхӑнни ҫинчен медицина ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ Марина Сонова каласа кӑтартрӗ. Ӑна пула уйӑх хушши пӑсӑлать. Ҫапах мӗнле чир-ха ҫакӑ? Кӗскен палӑртас тӑк – амалӑх тавра юн пуҫтаранса кӗвӗлни. Мӗнле лекет-ха вӑл унта? Ҫакна ӗмӗр вӑрттӑнлӑхӗпе те танлаштарчӗ докладчик. Уйӑх хушши час пӗтни, юн вӑйлӑ кайни, ҫак вӑхӑтра хырӑм тӗлӗнче ыратни, уйӑх хушши хӑвӑрт е кая юлса килни – эндометриоз пуҫланма пултарасса систерекен паллӑсем. Ӑна пулах ар ҫыхӑнӑвне кӗнӗ чухне ыраттарать, амалӑхра ача тӗвӗленеймест, хырӑм ӳкет...

Марина Сонова кашни хӗрарӑмӑн уйӑх хушшин календарӗ пулмаллине аса илтерет. Ыраттарнине хӗрарӑм уйрӑм шкалапа виҫме пултарать. Май пур таран маларах сипленме пуҫлани ҫӗҫӗ айне выртасран хӑтарӗ.

Медицина ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ Татьяна Казначеева уйӑх хушши пӑсӑлнине пула хӗрарӑмсем кулленех гинекологран пулӑшу ыйтнине палӑртрӗ. Чи малтанах, юн мӗн чухлӗ кайнине пӗлмелле. Сӑмахран, ҫакна пулах полип аталанас хӑрушлӑх пысӑк. Вӑл хӑй тӗллӗн иртмест, унран хӑтӑлма хирург кӑна пулӑшӗ. Хӗрарӑмӑн ыратнине чӑтмалла марри ҫине пусӑм турӗ Татьяна Викторовна. Чир-чӗр ан ҫыпӑҫтӑр тесен вӑхӑтра сипленмелле.

Амалӑхран юн кайма пуҫланине ҫавнашкалах хӑвӑрт мӑнтӑрланнипе е начарланнипе, анемипе, шыҫӑпа, сывӑ пурнӑҫ йӗркине пӑхӑнманнипе ҫыхӑнтарчӗ вӑл. Уйӑх хушши вӑхӑтра килни тухтӑрсемшӗн сывлӑх тӗкӗрӗ пекех.

## Уйӑх хушши – амалӑх куҫҫулӗ

Хӗрарӑмӑн тӗп тивӗҫӗ – йыш хушасси. Ахальтен мар уйӑх хушши килнине амалӑхӑн куҫҫулӗпе танлаштарчӗ кафедра доценчӗ.

Ҫие юлнӑ пепкене, паллах, ҫут тӗнче кӑтартас килет. Хырӑм ӳкнишӗн мӗн чухлӗ хӗрарӑм канӑҫ ҫухатать. Ҫирӗпленсе ҫитеймен организмшӑн вӑл уйрӑмах хӑрушӑ. Ҫакӑн сӑлтавне медицина ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ Ольга Конышева уҫӑмлатрӗ. Компьютерпа, гаджетсемпе пӗр вӗҫӗм усӑ курни, амалӑх тӗрӗс мар аталанни, сезонпа килӗшӳллӗ мар ҫипуҫ тӑхӑнни, инфекци ҫаклатни, пирус туртни, эрех ӗҫни, наркӑмӑшланни... варти пепкене усал витӗм кӳрет.

Тӗнче статистики ҫие юлнӑ хӗрарӑмсен 35-70 процентӗ анемипе нушаланнине ҫирӗплетет. Вениамин Чернов профессор юн ҫитменни хӗрарӑма хӑйне тата аталанакан пепкене сиен кӳни ҫинчен каласа кӑтартрӗ, сиплев ҫӗнӗ мелӗсемпе паллаштарчӗ.

ЭКО тавра 1968 ҫултанпах калаҫаҫҫӗ. 1975 ҫулта ҫак мелпе амалӑх тулашӗнче пепке тӗвӗленнӗ. 1978 ҫулта пӗрремӗш пепке ҫуралнӑ. Унтанпа тӗнчери 7 миллион ача ЭКО мелӗпе ҫут тӗнчене килнӗ. Ку енӗпе ӑнӑҫлӑ ӗҫлени ҫинчен Любовь Виноградова репродуктолог каларӗ. Ҫак ачасем ыттисенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑмаҫҫӗ.

## Савӑшма хатӗр-и?

Сывӑ хӗрарӑм ар ҫыхӑнӑвне кӗмешкӗн яланах хатӗр-и? Киленӳ илме мӗн чӑрмантарать ӑна? Татьяна Казначеева каланӑ тӑрӑх, йӑлтах кӑмӑлтан килет. Тӗпренчӗке садикрен илесси, килте апат пӗҫересси, укҫа ытларах ӗҫлесе илесси... ҫинчен шухӑшлакан хӗрарӑма савӑшу савӑнӑҫ кӳмест. Килти ӗҫсене упӑшкапа пӗрле пурнӑҫланине нимӗн те ҫитмест ахӑр. Унсӑр пуҫне ӗҫри стресс, ҫемье саланни, мӑшӑр пӗр чӗлхе тупайманни, амалӑха, кӑкӑра касса илни, ыратни хӗрарӑма хӑйӗн вӑйне туйма чӑрмантарать.

Татьяна Викторовна ҫавнашкалах ар органне ҫамрӑклатмалли мелсемпе паллаштарчӗ. Секс тӗлӗшпе опыт пуҫтарӑннине ҫын малтан – виҫӗ, унтан икӗ урапаллӑ велосипедпа ярӑнма вӗреннипе, кайран тӗрлӗ трюк тума хӑнӑхнипе ҫыхӑнтарчӗ специалист.

"Пирӗн хӗрача ҫитӗнсе ҫитменха. Ӑна гинекологи мӗнле чирӗсем нушалантарма пултарӗҫ?" – теҫҫӗ ачан ҫывӑх ҫыннисем. Тӗрӗс мар ыйту лартаҫҫӗ вӗсем", – сӑмах илчӗ Елена Сибирская профессор. Ача тӗвӗленейменнин тӗп сӑлтавӗсене палӑртрӗ вӑл. Хӗрсем организм ҫирӗпленсе ҫитеймесӗрех ар ҫыхӑнӑвне кӗреҫҫӗ. Ҫулталӑкне 3-4 хут инфекци чирӗпе асапланни, усал йӑлапа туслашни, кӗлетке аталанайманни ура хурать. Хырӑм ыратсан ача-пӑча гинекологӗпе ҫыхӑнмалла. Вунӑ ҫулчен ҫӑм шӑтма, кӑкӑр пысӑкланма пуҫласан специалистран канаш ыйтмалла.

## Кукамӑшӗн сывлӑхӗ – мӑнукне

Хӗрарӑм сывлӑхне йӑх пысӑк витӗм кӳнине палӑртрӗҫ хӑнасем. Кукамӑшӗн организмӗнчи чирсене унӑн мӑнукӗ мӗнле чирпе нушаланма пултарасси паллӑ.

Тӗлпулӑва пӗтӗмлетнӗ май Михаил Игнатьев тепӗр 9 уйӑхран е ҫулталӑкран хӑйне евӗрлӗ пӗтӗмлетӳ тума сӗнчӗ. Чӑнах, куҫ пек кӗтнӗ, сывлӑхлӑ, мал ӗмӗтлӗ ачасем ытларах ҫурални ҫакӑнта пуҫтараннисемшӗн нимрен хаклӑрах парне пулӗччӗ.

Лейла Адамян кун-ҫула икӗ тӗрлӗ – хӑнӑхнӑ йӗркепе тата асамлӑха ӗненсе – пурӑнса ирттерме май пурри ҫинчен каларӗ. Ҫавӑнпа ыранхи кунран лайӑххине ҫеҫ кӗтмелле. Сывлӑха ҫирӗплетме, ӗмӗте пурнӑҫлама, пурнӑҫ илемӗпе киленме тухтӑрсем пулӑшӗҫ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**







КАЛАÇУ

# Пĕр алăка уçакансем – ют мар

– Ырă кун пултăр, çак çăраççине туса параймăр-ши?

– Йăнăшмастăп пулсан эсир ман пата унччен те килнĕччĕ?

– Пулĕ те.

– Тĕрĕсех. Килнĕччĕ. Анчах ун чухне эсир йĕкĕтпеччĕ. Çăраççи те урăххиччĕ.

– Мĕне пĕлтерет? Эпĕ сире çăраççи туса пама ыйтатăп-çке. Пултаратăр-и? Е эсир кашнин пурнăçне тĕпчетĕр-и?

– Эпĕ иртнинчи вăрăм та хитре çăраççине çеç аса илтĕм. Халĕ вара – ахальли. Сирĕн темĕн сиксе тухман пулĕ те?

– Ку сире пачах пырса тивмест. Енчен те эсир манăн ыйтăва тивĕçтереймесен эпĕ урăх вырăна кайăп. Пурнăç пирки те тĕпчемĕç унта. Çăраççине тавăрсамăр.

– Аплах ан пăлханăр-ха. Хамăн ĕçе халех пурнăçлăп. Çăраççисене пĕтĕм пурнăçăма халаллană-çке эпĕ. Маншăн вĕсем кашни – хăйне евĕр экспонат. Малтан эпĕ çăраççине, унтан ăна илсе килнĕ çынна сăнатăп. Нумаях пулмасть çакна асăрхарăм: çăраççи çыххи тăрăх вĕсен хуçи пирки те калама пулать.

– Нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Тĕрлĕ психологи аталаннă май халĕ çын çинчен сивĕтмĕшри апат тăрăх та темĕн те пĕлеççĕ.

– Килĕшетĕп. Анчах хамăр сăнав тăрăх пĕтĕмлетӳ тума тата кăсăклăрах. Çăраççи те лакмус пек. Вăл хуçине питех те аван сăнлать.

– Сăмахран...

– Хăшĕ-пĕрин пуххинче ыттисенчен уйрăлса тăракан пысăк çăраççи пур. Пĕчĕккисем темĕн чухлех пулсан та – вĕсем ниме те пĕлтермеççĕ. Çыхăра çак патша-çăраççи çеç пĕлтерĕшлĕ. Унсăрăн нимĕн те пулмĕччĕ, тен, хуçи те. Çыхă çав тери пысăкран ăна алăран та яма çук, вăл урăх ниçта та вырнаçаймасть. Ку тĕлĕшпе хĕрарăма ансатрах-ха: вĕсен çăраççи упрама арча – сумка – пур. Арçынсен вара шăтнă темиçе кĕсье хыççăн мĕн те пулин шухăшласа тупма тивет. Теприсем вара ăна алăран вĕçертмесĕр çӳреççĕ. Унпа çул та кăтартаççĕ, пуç та хыçаççĕ, пушмак та тăхăнаççĕ. Çăраççи вĕсен кĕлеткин тăсăмĕ пулса тăрать. Хăйне евĕр антенна урлă вĕсене асамлă хăват кĕрет тейĕн. Вăл пĕтĕм кĕлетке тăрăх ăшăлăхпа сапаланать. Вĕсенчен çăраççине илсе пăхăр-ха – канăçсăрланма тытăнĕç. Пӳрнисем сиккелеме, чĕлхи чĕтренме тытăнĕ. Ахаль çеç тейĕр-и? Иккĕленетĕп.

– Манăн шухăшпа, пĕтĕмпех ансат. Алăк çине çапла çăра вырнаçтарнишĕн вĕсем айăплă тетĕр-и?

– Эпĕ вĕсене айăпламастăп-çке. Алăк çине кунашкал çăра вырнаçтарни ăнăçсăрлăх теме те хатĕр. Кунашкал çăра хуçи пулма кашнинех пӳрмест вĕт.

Хĕр шухăша кайрĕ. Мучи çине тимлĕн пăхрĕ. Пĕрре пăхма – ахаль çынах. Тепĕр енчен, хăйĕн çак кĕтесĕнчен пĕр тухмасăр çирĕм çул ларнăран йӳтемех пуçланă тейĕн.

– Сирĕн часах пулать-и?

– Эпĕ урăх çĕре пурăнма куçсан та малтанхи çĕрти патша-çăраççине пăрахман çынсене те пĕлетĕп. Кирлĕ марскерне йăтса çӳреме мĕн хистет-ха арçын-хĕрарăма? Ăна кĕсьене те чикме çук-çке. Кунта темле вăрттăнлăх пурах.

– Пурте апла мар-çке. Хăшĕ-пĕри кивĕ çăраççине тухса ывăтать.

– Ывăтать-и? Эпĕ ун пек çынна халиччен пĕрре те курман. Эсир сăнанă-и? Иккĕленетĕп. Çынсем темшĕн киввине те упраççĕ. Çăраççи çыххинчен салтса сунтăха хурсан çеç... Çухатма пултараççĕ, анчах ывăтмаççĕ. Сăмах май, эсир çăраççи çухатса курнă-и? Ун чухнехи кăмăл-туйăмăра аса илĕр-ха. Хăвна кĕсье тĕлĕнчен çапма, йĕри-тавра пăхма тытăнатăн. Ăсра çăраççине ăçта çухатма пултарнине çавăрттаратăн. Палăртнă маршрутпа каялла чупатăн. Шырани куç тĕлне пулсан еплерех савăнатăн тата! Тупмасан-и? Ку пысăк чăрмав пулса тăрать. Хăв сисмесĕрех ăна нумайччен шыратăн. Çĕнни тусан та ăна вăрахчен киввипе танлаштаратăн. Çакă çывăх çынна çухатнă самантa аса илтермест-и вара?

– Пулĕ те. Анчах мĕншĕн-ха эсир хăвăр çыххăра çавнашкал çăраççи çакмастăр? Тен, ун чухне вăрттăнлăхне тупăр?

– Мĕншĕн? Çăра уçма çук çăраççинчен мĕн усси? Вăл ют алăка уçать тĕк – пушшех?

– Эсир каланинче тĕрĕслĕх те пур-ха.

– Урăх тĕрлĕ çынсем те пур. Вĕсен çыхăра – икĕ-виçĕ çăраççи. Анчах вĕсем те кĕсьене кĕмеççĕ, мĕншĕн тесен брелок тавраш темĕн чухлех çакса тултарнă. Кунашкал çын алăк умне çитсен хăйне евĕр карнавал пуçланать – çăраççи пуххи шăнкăртатма тытăнать. Вăл урампа та лайăх илтĕнет. Çавăнпах таврари çынсем те шăпах çак çын таврăннине çăмăллăнах тавçăраççĕ. Кун пек çынсем малтанхи пурнăçра музыкçă е тĕрмери надзиратель пулнă-тăр.

– Тĕрĕсех. Кунашкаллисене эпĕ те пĕлетĕп.

– Е тата управçăсем. Вĕсенче пĕр-пĕр алăка уçакан пĕртен-пĕр çăраççи упранать. Вĕсем хыççăн тепĕр чухне хулан тепĕр вĕçнех çитме тивет. Кайран – тавăрса памалла. Вĕсем управçă тивĕçне туллин пурнăçлаççĕ.

– Манăн кунашкал пĕлĕш те пур.

– Чи кăсăкли мĕн икенне пĕлетĕр-и?

– Мĕн?

– Пĕрешкел çăраççисем пĕр-пĕрне юратакансенче çеç пур.

– Паллах. Вĕсем пĕр хваттерте пурăнаççĕ-çке. Пĕр алăка уçса кĕреççĕ.

– Яланах мар. Чи кирли – икĕ çынра пĕр алăках уçакан çăраççи пур чухне вĕсем пĕр-пĕриншĕн ют мар.

– Мĕн каласшăн пултăр-ха эсир?

– Иртнинче сирĕнпе килнĕ йĕкĕт хăйĕн çăраççине тепре тутарма васкамасть-ха. Сирĕн те вăл халĕ те пур. Тен, эпĕ паян пани кирлех те мар?

– Пулĕ те. Сирĕн патăрта вырттăр вăл. Юрать-и? Кирлех пулсан килсе илĕп ăна.

– Çăраççи управçи пулма сĕнместĕр пулĕ?

– Ун пек те юрать. Тавах сире, – савăнăçлăн тав турĕ пике. Хаваслă кăмăлпа малалла вĕçтерчĕ.

Мучи сĕтел сунтăхне уçса унти тĕрлĕ çăраççи купи çине пăхрĕ.

– Хальлĕхе никам та таврăнман-ха, – терĕ вăл хăй çеç илтмелле унта тепĕр çăраççи пăрахса.

**ЕКАТЕРИНА.**
Шупашкар хули.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Упăшка алă çинче йăтса çӳрет

Кукамай патне хăнана çӳреме юрататтăм. Вăл, вăрçă вăхăтĕнче çитĕннĕскер, укçине хытă тытатчĕ. Çапах пирĕншĕн, мăнукĕсемшĕн, юлашки тенкине кăларса пама хатĕрччĕ. Ăна тӳрех лавккана çавăтса каяттăмăр. Вăл пире канфет-пĕремĕк, ручка-кăранташ, çи-пуç илсе паратчĕ. Лайăхчĕ унăн ытамĕнче. Çакăнтах Олегпа паллашрăм. Клубра утăм тума памастчĕ вăл мана. Киле пĕрле таврăннă чухне те сăмах сыпăнман пирĕн. Килĕшмен çынпа мĕн сӳтсе явăн? Вĕçкĕнсене ачаранах чăтма пултараймастăп. Тата хамран çӳллĕрех каччăсенчен те пăрăнса иртес килет. Олег вара лутра та типшĕм кĕлеткеллĕ. Çапах ăна та хĕрсем килĕштеретчĕç. Вăл яланхиллех мана кусран вĕçертмест.

Салтака ăсатса яма чĕнчĕ – каймарăм. Манран сивĕнчĕ пуль тенĕччĕ. Çук, çĕршыв хӳтĕлевçи çыру хыççăн çыру вĕçтерчĕ. Ăна шеллесе хурав ятăм. Вăл юратни çинчен çырма пуçларĕ. Эпĕ чуна уçман, çĕнĕ хыпарсем пĕлтернипех çырлахаттăм.

Хĕсметрен арçын пулса таврăнчĕ Олег. Ман çӳллĕш çитĕнни тӳрех куçа курăнчĕ. Унăн хул-çурăмĕ сарăлнине ыттисем те асăрхарĕç. Ташă каçĕнче мана çĕклесе çаврăнчĕ. Кур-ха, вăйĕ те хушăннă!

Те унран тарса йăлăхрăм, те ыттисем пекех мăшăрлă пулас килчĕ – парăнтăм, каччă тухма килĕшрĕм. Кăштахранах мĕн туса хунине ăнланса илтĕм. Хирĕçлеме те пулатчĕ, анчах эпĕ хамăн сăмаха çилпе вĕçтерме хăнăхман. Каланă тăк – тумалла.

Туйра хытă макăртăм. Малтанах мана никам та лăплантараймарĕ. Çапах хама алла илтĕм. Тепри пулсан йăл кулăпа çиçетчĕ, ташлатчĕ, тав туса парне йышăнатчĕ. Мана нимĕн те савăнтармарĕ.

Упăшка хăйĕн юратăвне ĕçпе çирĕплетме пуçларĕ. Кил таврашĕнче тем тума та пĕлет. Ĕмĕт-тĕллевĕ те пысăк унăн. Колхоз çĕрĕсене арендăна илчĕ, техника туянчĕ мăшăрăм. Апат çимесĕр тенĕ пек ĕçлет. Укçа пуçтарса икĕ хутлă çурт лартрĕ. Пирĕн пекки таврара та пĕрре çеç.

Кил-çурта юратура çуралнă ачасен сасси илем кӳрет. Ахальтен мар кукамай Олегпа пĕрле телей шырама каларĕ. Ĕçченлĕхĕшĕн, вăр-варлăхĕшĕн, шухăшне пурнăçа кĕртме тăрăшнишĕн хисеплетĕп ăна. Ахалех тиркенĕ малтан. Унран лайăхрах упăшка пур-ши çĕр çинче?

«Ялта пурăнатпăр пулин те хулара тĕпленнисенчен хитререх тумланмалла санăн», – аса илтерсех тăрать вăл мана. «Юлашки вăхăтра мăнтăрлантăн», – юлташсемех кăмăла пăсасшăн. «Куратăр вĕт, упăшка çуран уттармасть, алă çинче йăтса çӳрет», – тетĕп йăл кулса.

Нумаях пулмасть черетлĕ кĕпе туянас вырăнне тренажер илтĕм. Кĕçех ытлашши килограмсенчен хăтăлăп та малтанхи пекех хитре пулăп.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

ЧУНРИ

# Хĕрарăм яланлăхах уйрăлать

Чун тасалăхĕпе илĕртрĕ вăл мана. Тĕл пулас тенĕ чухне кун пирки нихăçан та уççăн пĕлтерместчĕ хăй. Яланах мĕнле те пулин сăлтав тупатчĕ: е кофта туяннă, е пушмакне хакламалла, е çĕнĕ сăнсем ӳкерттернĕ – пахаламалла. Кунашкал хĕрарăм арçынна иртĕхтерет те. Унран уйрăлас та килмест пек... Çав вăхăтрах алхасатăн та. Эсĕ вăл пĕртен-пĕр санăн иккенне, урăххипе çыхланмасса пĕлетĕн. Каяс пулсан та ун патне яланах таврăнма пулать. Вăл сана чунран юратать – çавăнпах ăнланать те каçарать, темле пулсан та йышăнать.

Кунашкал хĕрарăма шанма та юрать, мĕншĕн тесен вăл сана улталамастех. Хăйне урăхла тытма пултараймасть вăл.

Эпĕ ăна ĕçри йывăрлăхсем пирки часчасах каласа кăтартаттăм. Çавăнпах вăхăт çуккине те ĕненетчĕ. Юлашкинчен улталаса ывăнтăм та пирĕн уйрăлмаллине пĕлтертĕм. Ку хыпара вăл йывăррăн йышăнчĕ, анчах пырне ларнă чăмаккана çăтса яма пултарчĕ.

– Кунашкал туни тĕрĕсрех тесе шухăшлатăн тăк – юрать, – терĕ çеç.

– Кӳренместĕн-и?

– Çук. Асăмра санпа çыхăннă хавас самантсем çеç.



Вăл мана чăрмантаракан, чунне уçакан çырусем нихăçан та çырман. Темиçе уйăхран çеç пĕртен-пĕрре шăнкăравларĕ. Эпĕ чĕрĕ-сывă иккенне пĕлесшĕн пулчĕ.

Пĕр хушăран манăн унăн сассине илтес килчĕ.

– Салам. Эсĕ сывлăхăм пирки пĕлме шăнкăравласса кĕтрĕм. Кĕтсе илеймерĕм. Çавăнпах хам шăнкăравларăм, – терĕм.

Нумайччен ахăлтатса кулчĕ. Вăл малтанхиллех манăн иккенне туйрăм. Эпĕ вара халĕ те аташса çӳретĕп. Пурăнакиле ку ывăнтарсах çитерчĕ. Пĕррехинче эпĕ ун патне таврăнма шухăш тытрăм. Пĕр каçхине шăнкăравларăм... Вăхăтсăр иккен. Çапах телефона тытмасăр пултараймарĕ вăл. Лăпкă кĕвĕпе арçын сасси илтĕнчĕ. Самантранах кăкăрта темскер çав тери канăçсăрлантарма тытăннине ăнлантăм. Чуна бензопăчкăпа касса вакларĕç тейĕн.

– Мана халĕ калаçма меллĕ мар. Каярах шăнкăравлăп, – терĕ вăл.

Пĕрремĕш хутчен сăмахне тытмарĕ – хирĕç шăнкăравламарĕ. Çав каç та, тепĕр кун та... Паллах, эпĕ пĕтĕмпех ăнлантăм. Текех чăрмантармарăм. Ăна пĕлетĕп-çке – вăл унран уйрăлмастех, пушшех те – улталамастех.

Пурнăçра арçыннăн хĕрарăм темĕн чухлех пулать-ха, анчах асра пĕр-иккĕшĕ çеç юлать – чăннипех шанма юранисем, улталаманнисем. Анчах çакна кая юлса – вĕсем санран уйрăлсан çеç ăнланса илетпĕр. Арçынсем таврăнаççĕ-ха, хĕрарăм вара яланлăхах каять иккен...

**ВАÇÇА.**

**Виктор СИМАКОВ**

# Тивлет

**/Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.**

Каçхине çамрăксем ялти уяв вырăнне пуçтарăнчĕç. Пуçлаканĕ – Укçине. Вăл ĕçре те паллă. Утă çулнă вăхăтра та, çурлапа тырă вырнă вăхăтра та яланах малта пырать.

Акă хĕрсем алăран алла тытăнса карталанса тăчĕç. Укçине юрă пуçларĕ:

Çитнĕ кĕтнĕ Микула,
Пуçлар халĕ уява.
Тухăр, хĕрсем, урама,
Атьăр пуçлар уява.

Тарăн варта хур пусрăм та,
Тарăн варта хур пусрăм.
Калина моя та, малина моя.
Вăрă тесе ан калăр та,
Вăрă тесе ан калăр,
Калина моя та, малина моя.
Юр пуçласа юрларăм та,
Юр пуçласа юрларăм.
Калина моя та, малина моя.
Пит шух тесе ан калăр та,
Пит шух тесе ан калăр.
Калина моя та, малина моя.

Уяв карти пысăкланнăçем пысăкланса пырать.

Çак уяв чăвашăн пин-пин çул ăруран ăрăва куçса пырать. Çак кунхи юмахри пек илемлĕ, асамлă уяв карти çинчен вырăссен паллă писателĕ Н.Г.Гарин-Михайловский пирĕн енчи чăвашсем ăна мĕнле паллă тунине курса çапла çырнă: «Хĕрсем пĕр-пĕрне алăран тытса пысăк çавра карта туса юрласа ячĕç. Эпĕ кунашкал хăйне евĕрлĕ тĕлĕнмелле юрă-ташă нихăçан та курман. Курнă сцена çинче – балет е опера. Анчах ку балет та, опера та мар – чĕрĕ пурнăç. Никам та ятарласа хатĕрлемен ăна. Хĕрсем пĕр-пĕрин хыççăн майĕпен утаççĕ, вĕсемпе пĕрле пĕтĕм тĕнче юрласа çаврăннă пек туйăнать. Мĕн вăл романс, мĕн вăл опера? Пин-пин çул йывăр асапа чăтса, çапах пурнăç, çутçанталăк илемне чĕререн туйса, унпа киленсе, савăнса пурăнма пултарнă чăваш халăхĕн ырă кăмăлне, сăпайлăхне, ĕçченлĕхне, йăвашлăхне çак хĕрсен уяв карти кăтартса парать.

Кунашкал юрăсене пĕр çын нихăçан та шухăшласа кăларайас çук. Ку – пĕтĕм чăваш халăхĕн пĕрлешнĕ пултарулăхĕ, чĕлхе, юрă, ăс-тăн пуянлăхĕ». Хĕрсен тумтирĕсем çинчен вăл çапла çырнă: «Вĕсем вăрăм шурă кĕпесемпе, хулпуççисемпе кăкăрĕсем çинче – хĕрлĕ хăюсем, çурăм хыçĕнче – алшăлли евĕрлĕ «сарă» текен капăр виткĕç. Пуçĕсене авалхи славянсен çар çынни евĕрлĕ шĕвĕр тăрăллă шлемсем тăхăннă, вĕсене йăлтах шултра кĕмĕл укçасемпе илемлетнĕ».

Çакăн пек уяв Питравччен кашни каç пырать. Юлашки вырсарникунне вара кăнтăрла та ирттереççĕ.

* * *

– Шуçăмпи, эсĕ манăн кăмăла каятăн. Эпĕ сана юрататăп. Эсĕ манăн чĕререн тухмастăн. Сан çинчен аса илмен кун та иртмест, – терĕ Сентиер.

– Темĕнçке, арçынсене шанма çук. Вĕсем санпа пĕрле чухне юрататăп теççĕ. Ун çинчен такмакĕ те пур:

Юрататăп тенине
Ан шан, юлташ, нихçан та.
Юрататăп тенипе
Юратмасть вăл нихçан та.

– Мĕнле ĕнентерем-ши сана юратнине, Шуçăмпи?

– Ĕнентерме кирлĕ мар. Кăçал патшалăх экзаменĕсене тытса диплом илмелле. Ăçта яраççĕ-ха? Хальлĕхе паллă мар. Çавăнпа та халь юрату çинчен шухăшлама вăхăт çук.

– Диплом илнĕ хыççăн тĕл пулăпăр, Шуçăмпи.

Шуçăмпи хуравламарĕ.

* * *

Практика вăхăтĕнче Шуçăмпи хăйпе пĕрле вĕренекен Енилепе пĕрле пĕр колхозра пулчĕ. Ениле колхозра техникăна çуракине хатĕрлес ĕçре тăрăшрĕ. Шуçăмпи выльăх-чĕрлĕх ферминче пулчĕ.

Ениле илемлĕ каччă. Çынпа çав тери çаврăнăçуллă калаçать. Хĕрпе каччă тĕрлĕ ыйтăва пĕрле сӳтсе яваççĕ. Практика вăхăчĕ иртсен иккĕшĕ те пĕрле института таврăнчĕç. Иккĕшĕн ĕçне те лайăх хак панă. Вĕренӳ çулĕ вĕçленес умĕн Енилепе Шуçăмпи улăха уçăлса çӳреме тухрĕç. Юр ирĕлсе пĕтнĕ. Лупашкасенче те юр юлман. Улăхçаран, вăрман ешĕл тум тăхăнма пуçланă. Кайăксем те çуркуннене савса илемлĕн чĕвĕлтетеççĕ, юрă шăрантараççĕ. Ениле калаçнă май Шуçăмпи çине ăшшăн пăхать.

– Кăмăла каятăн эсĕ, Шуçăмпи.

– Санăн юратăвна тивĕç-ши эпĕ? Тен, эсĕ юри калатăн?

– Юри мар, Шуçăмпи.

Иккĕшĕ те пĕр-пĕрне хулран çаклатнă. Акă вĕсем пĕр ансăр çырма хĕрне пырса тухрĕç. Ун урлă каçма хăма хунă. Ениле çырма урлă сиксе каçрĕ те Шуçăмпие пулăшма тесе ăна хирĕç тăчĕ. Каччă хĕре аллинчен тытса хăй патнелле туртрĕ. Шуçăмпи Ениле ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Каччă хĕре хăй çумне пăчăртаса тутинчен хĕрӳллĕн чуптурĕ. Ток çапнă пек çан-çурăм тăрăх темле ырă туйăм шăм-шакка çемçетсе янă пек йăвашшăн саланчĕ. Çак туйăма Шуçăмпи те аванах туйрĕ.

– Эсĕ илемлĕ, хитрелĕхе сана çутçанталăк тивĕçлипех панă. Эпир яланах иксĕмĕр пĕрле пулнă, уроксене те пĕрле хатĕрленнĕ. Çапах та халиччен юрату çинчен, ун туйăмĕ пулсан та, асăнман. Юрататăп тесе уççăн калама именеттĕм. Халь уççăн калама пултаратăп. Юрататăп эпĕ сана, Шуçăмпи.

– Эпĕ вара ку юрату çинчен пĕрре те хускатмасть, санăн юрату туйăмĕ çук пулĕ е урăххине кăмăллатăн-тăр тесе шухăшлаттăм. Эпĕ сана кăмăллатăп пулин те хĕр малтан хăй юратнине уççăн калаймасть.

– Эсĕ те мана юрататăн-и?

Çапла вĕсем пĕр-пĕрне кăна, урăх никама та, юратма тупа турĕç.

Институтра илемлĕ пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленсен Шуçăмпи унта хутшăнчĕ, сцена çинче пĕрре мар юрларĕ. Хăйпе пĕрле Енилене те çак ушкăна явăçтарчĕ вăл. Иккĕшĕ пĕрле юрланă, анчах юрату çинчен уççăн калаçма именнĕ.

Пирвайхи юрату туйăмĕ çавăн пек çав. Ху юратакан хĕре те уççăн калама хăймастăн. Хăвăн чĕрӳне вăрттăн çунтарса çӳретĕн.

Çапла Енилепе Шуçăмпи туслăхĕ чăн-чăн юратăва куçрĕ. Вĕренсе тухнă хыççăн вĕсем пĕрлешме сăмах татрĕç.

Акă часах вĕренӳ çулĕ те вĕçленчĕ. Патшалăх экзаменĕсене иккĕшĕ те лайăх тытрĕç. Енилепе Шуçăмпи халь дипломлă, аслă пĕлӳллĕ ял хуçалăх ĕçченĕсем. Анчах та вĕсене уйрăм районсене ячĕç. Вĕсем иккĕшĕ те пĕрле пĕр района каясшăнччĕ. Пулмарĕ. Шуçăмпи Сентиер пурăнакан района лекрĕ. Участокри выльăх врачĕ вăл халĕ. Вăл участока Сентиер пурăнакан ял та кĕрет. Шуçăмпин час-часах вĕсен ялĕнче те пулма тӳр килет.

Сентиер çакна пĕлсен Шуçăмпие диплом илнĕ, ĕçлеме тытăннă ятпа саламлама килчĕ. Чечек çыххи те илнĕ. Каçхи вăйă вăхăтĕнче Сентиер Шуçăмпие тĕл пулчĕ. Ăна диплом илнĕ ятпа саламларĕ, чечек çыххи тыттарчĕ, вăйă айккине кайса пĕрле калаçса ларма чĕнчĕ. Шуçăмпи килĕшрĕ.

– Манăн, Шуçăмпи, сан çинчен шухăшламан кун та иртмест. Питĕ тунсăхларăм. Сана диплом илнĕ ятпа тепĕр хут саламлатăп. Ĕçĕр малашне яланах ăнса пытăр, – терĕ Сентиер.

– Тавах ырă сăмахусемшĕн. Анчах та ман çинчен тăтăшах шухăшласа çӳремелле мар. Эпĕ сывах-ха.

– Шуçăмпи, эпĕ сана юрататăпçке.

– Эсĕ мана каçар, Сентиер, анчах манăн юратнă каччă пур. Эпир унпа институтран пĕрле вĕренсе тухрăмăр. Анчах пире пĕр района ямарĕç. Эпир унпа пĕрлешме сăмах татрăмăр.

– Мĕнле апла? Эпир пĕр-пĕрне килĕштереттĕмĕр-çке?

– Вăл юлташла пулнă. Халь те юлташлă пулăпăр. Эсĕ ĕнен, Сентиер, эпĕ сана хисеплетĕп, юлташ вырăнне хуратăп пулсан та пĕр вăхăтра икĕ çынна юратаймастăн. Кашни хĕр хăйĕн юратнă каччипе пĕрлешме ĕмĕтленет. Эсĕ ăнлан, Сентиер, эсĕ мана юрататăн пулсан та пĕр енлĕ юрату тулли телей кӳме пултараймасть.

Сентиер Шуçăмпи çине ăмсанулăн пăхса юрласа ячĕ:

Кирлĕ пек, тен, сăмах
тупаймарăм,
Пĕлеймерĕм сана йăпатма.
Ăш сăмах, тен, тупма
чухлаймарăм,
Пурпĕр йывăр сана халь манма.

– Ан ӳпкелеш, Сентиер. Йывăра ан ил. Эсĕ начар каччă мар. Темĕнле хĕре те савăрма пултаратăн. Тупăнĕ-ха сан тĕле те. Каччă хăш вăхăтра та хĕр тупса авланса яма пултарать. Хĕр вара хăй юратнипе, каччă авланас темесен, ирĕксĕр каччă кайма пултараймасть.

– Енчен те эпĕ сана ĕлĕкхи пек вăрласа илсе кайсан?

– Сентиер, çын телейне туртса илнипе телейлĕ пулаймăн.

– Мĕн тăвăн, ирĕксĕр юраттарма çук. Телей кăна сунатăп сана, Шуçăмпи. Ху юратнипе пĕрлешмелле пултăр. Унпа пĕрлешес пулсан сире пĕр-пĕринпе килĕштерсе лайăх пурăнма çеç сунатăп, – терĕ те Сентиер, Шуçăмпие ал парса ун патĕнчен пăрăнса кайрĕ. Шуçăмпи ăна шелленĕ пек пулса юлчĕ. «Каччи начар мар та, ăна çывăха ярататăп пулин те Ениле юрататăп», – терĕ Шуçăмпи хăйне йăпатса.

Çавăн хыççăн хĕр шухăша путрĕ. Мăшăрсене сăнать вăл. Кам мĕнле пурăнать? Ав Мăрсук Тайпипе пĕрлешрĕ. Тайпи патак айĕнчен тухаймасть. Мăрсука юратать хĕр. Каччă ăна юратман пулас. Мăрсук ашшĕ-амăшĕ хистенипе авланчĕ. Халь урăх хĕрарăмсем патне çӳрет тени те илтĕнкелет. Ялта вăл енĕпе вăрттăнлăха пытарма çук çав. Пĕр шухăшласан, арăм çине алă çĕклесен каçхине мĕнле кăмăлпа ун çумне кĕрсе выртмалла? Килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитмест. Тепĕр чухне хĕрарăм ытларах шавлама юратать. Пĕрле пурăннă вăхăтра чашăк-тирĕк шăкăртатмасăр пулмасть. Кун пек чухне чĕнмесен аванрах. Пĕр-пĕрне хирĕç кăшкăрма, тем те пĕр каласа хăртма та пулать, сăмаха хирĕç сăмах тупăнать. Ку вăл мăшăрсене пĕр-пĕринчен пистерни кăна. Айăпа та йышăнма пĕлмелле. «Енилепе пурăнма тытăнсан пирĕн пурнăç мĕнле пулĕ-ши?» – терĕ май шухăшласа пăхать Шуçăмпи. Мĕнле пулсан та пĕрле ĕмĕр иртермелле. Ачасем çуралĕç. Ачасем ашшĕпе-амăшне пĕр тĕвве чăмăртанма, çемье тĕрекĕ пулма хăват кĕртсе тăраççĕ. Хăть те мĕнле ачана та тăван ашшĕпе амăшĕ кирлĕ.

**/Малалли пулать/.**

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

**Татьяна БОРИСОВА**

* * *

Хальхи туссем... Камсем вĕсем?
Юнашарах пырса лараççĕ
Ăш пиллĕн, ыррăн калаçаççĕ,
Сăпайлă шутсăр курăнаççĕ.

Юлсассăн эсĕ тăр-пĕччен,
Хурлăхпала чуну кӳтсен
Ун чух кала, ăçта вĕсем –
Сан çумăнти юлташусем?

* * *

Çумра пулсан юлташ,
Кăмăлĕпе ан пултăр чăкăлташ,
Кӳрентерсен вăл кĕтĕр сан хута,
Йывăрлăхра вăл кĕтĕр хĕм вута.

Çумра пулсан юлташ
Хĕрӳлленсе унпа эс ан тавлаш.
Чăн юлташна тивĕçлипе хакла
Кӳрентерсе ăна эс ан ятла.

Çухатас мар çумри юлташсене,
Тăратас мар çума тăшмансене.

**Анатолий МАКСИМОВ**

### Ташласан-юрласан та...

– Ан юрла, телей çук, – астутарчĕ анне
Купăса эп тăссан хамăр кивĕ пӳртре.
Савăнмасăр май çук: ун чухне
çуркунне!
Сирĕлет умăмран кăшт каранлă тĕтре.

Шăхăрма юрамасть килĕмри тĕпелте!
Çиллĕн пăхнă вара унталла кукамай.
Çурăм урлă лекет хăмсаран кĕвенте:
– Кĕсьене пушатан çавăнпа эс пĕрмай!

– Юрласан телей çук! – хуйхăланнă
анне,
Купăспа тепĕр чух хавасланнă пĕрле.
Юрламасăр утатăп масарĕ енне,
Вилтăприйĕ çинче чараймас куççуле.

Ташласан-юрласан та – пĕр пек
ĕмĕрсем,
Шăхăрсан-шăп ларсан та кĕмеç
укçисем.
Ваттисен сăмахне итлесе ӳснисем,
Эпир хамăр паян асатте
пулнисем...

**Людмила СОРОКИНА**
**/Пурлушкина/**

### Пĕчченлĕх

Пин çул тупса чуна кĕрет Пĕчченлĕх
Пĕр вăтанми, кĕтмен хăна пулса.
Йĕри-тавра хуçаланать Кичемлĕх,
Тулта чупать сив çилĕ урмăшса.

Çанталăкпа хăй пĕр чĕлхе халь тупнă,
Çӳçентерет мана тăман ташши.
– Ан кĕр кунта, эп алăка-çке хупнă!
Паян вăл çуртăмра – тĕнче патши.

Хĕл кунĕнче пăрланнă сивĕ кантăк.
Ах çĕрĕ вăрăм, кунĕ пит кĕске.
Ăш хӳтлĕхе пытаннă шăннă
кайăк
Куçа пăвать умри хура мĕлке.

Çĕр çул тупса ăша кĕрет Салхулăх,
Ăса-тăна йăлтах çавăрттарса.
Тин асăрхачĕ сип-симĕс улăх...
Йĕрес килет иртнишĕн антăхса.

Çулсем пĕр чарăнми мала чупаççĕ,
Çинçе çипсем караççĕ пит çине.
Тахçан эп хам та çамрăк хĕрачаччĕ,
Никам та тавăрман-ха иртнине...

Ман алăкран шаккать паян Пĕченлĕх,
Кĕрет пӳрте кĕтмен хăна пулса.
Йĕри-тавра хуçаланать
Кичемлĕх,
Тулта чупать сив çилĕ уласа.





ĔНЕНЕТĔР-И Е ÇУК-И?

# Йăх ылханĕ

**Хăш-пĕр йăха темиçе сыпăк таран ылхан хăвалать тейĕн... Калăпăр, Кеннедисен, Романовсен йăх-тымарĕ пĕтсе пынине урăхла ăнлантарма та çук – инкек вĕсен ура йĕрне пуссах пынă.**

**Çын пурнăçне татни, ăнланмалла мар вилĕм, эрех-сăра, наркотик... Мĕн ку? Ăнсăртран тӳр килни-и е ылхан-и? Инкеклĕ йăхсене тишкерсе тухар-ха.**

### Кеннеди



Ирланди-Америка йăхĕн пусĕнче 1858 çулта çут тĕнчене килнĕ Патрик Джозеф Кеннеди тăнă. Унăн аслă ывăлĕн тăхăр пăхаттир çуралнă. Вĕсенчен тăваттăшĕн пурнăç ирех татăлнă, çав шутра – АПШ 35-мĕш президенчĕн Джон Кеннедин: ăна Далласра 1963 çулхи чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕнче персе пăрахнă. Темиçе çултан унăн тăванĕ Роберт Кеннеди те çакăн пекех вилнĕ – вăл президент суйлавне кандидат пулса хутшăннă. Çамрăк ăру та инкек çулĕпех утнă – Джон тата Жаклин Кеннедисен тăватă ачинчен иккĕшĕн кун-çулĕ пĕчĕклех татăлнă. Виççĕмĕшĕ авиакатастрофăран чĕррĕн тухайман.

### Онассис



Джон Кеннедин тăлăха юлнă арăмне Жаклина качча илсен Аристотель Онассиса еркĕнĕ Мария Каллас ылханнă теççĕ. Апла-и, капла-и, 1973 çултанпа Онассис çемйи трауртан тухайман: Аристотель ывăлĕ Александрос авиакатастрофăра вилнĕ, малтанхи арăмĕпе хĕрачи хăйсем çине алă хунă. Йăх пусĕ хăй те 1975 çулта чир шала кайнипе питĕ хăвăрт вилсе кайнă – ăна ӳпке шыççинчен хăтарса хăварайман.

### Романовсем



Сас-хура тăрăх, патшапа унăн йăхне Марина Мнишек ылханĕ çитнĕ. Хăй вăхăтĕнче унăн ывăлне Романовсен йăхне пусăрнă Михаил хушнипе çакса вĕлернĕ. Çакăнтан пусланнă та Романовсен нумай ĕмĕре пынă инкекĕ – патша керменĕнчи пăлхавсем, каварлашусем, çын вĕлернисем... Вырăс юлашки патшине II Николая çемйипех персе вĕлернĕ.

### Хемингуэй



Çак йăх темиçе ĕмĕр депрессие пула асапланнă. Ку амак вĕсемшĕн чăн инкеке çаврăннă. Паллă писателĕн ашшĕ Эрнест Хемингуэй çемьере телей тупнă темелле, сывăх çыннисемпе питĕ аван хутшăнса пурăннă. Апла пулин те каярахпа пурнăçпа хăйĕн ирĕкĕпе сывпуллашнă.

Эрнест хăй те çак чире парăнтарайман – 61 çула çитсен хăй çине алă хунă. Писателĕн аппăшĕпе пиччĕшĕ те çак мелпех хăйсен ĕмĕрĕсене татнă. Çакăн хыççăн тăвансем пĕр вăхăт чиперех пурăннă. Анчах та темиçе теçетке çултан амак татах хăй çинчен аса илтернĕ – Эрнест Хемингуэй хăй çине алă хунă кун çитиччен талăк маларах унăн мăнукĕ Марго пурнăçпа сывпуллашма çак меслетех суйласа илнĕ.

### Брандо



Паллă актер Марлон Брандо çемйинче инкек-синкек тĕлĕнмелле тăтăш пулса иртнĕ. Кун пек чухне йăх ылханĕ çинчен мар тăк урăх мĕн çинчен каласмалла?

Марлонăн амăшĕ тата пĕрремĕш арăмĕн пурнăçĕсем эрех ĕçнине пула татăлнă. Актерăн ывăлне йĕплĕ пралук леш енне пилĕк çуллăха ăсатнă – йăмăкĕн савнине вĕлернĕшĕн. Савнă çыннине çухатнине Брандо хĕрачи чăтса ирттереймен – унăн шизофрени пусланнă. Кĕçех вăл хăйĕн текех пурăнас килменнине пĕлтерсе тĕллевне пурнăçа кĕртнĕ.

### Ли



Çапăçу меслечĕсен мастерĕ, паллă киноактер Брюс Ли 33 çулта ăнланмалла мар сăлтавсене пула вилнĕ. Сас-хура тăрăх, арçын пуç ыратнинчен эмел ĕçнĕ. Анчах та çакна пула унăн пуç мими шыçса кайнă, актер питĕ хăвăрт вилсе выртнă.

Анчах та Брюс Лие пĕлекенсем çакна ĕненмеççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, ăна хăйĕн ĕçтешех тĕп тунă.

Ли ывăлĕ Брэндон ашшĕн çулне те пурăнса çитеймен, унăн кун-çулĕ "Ворон" фильма ӳкернĕ чухне татăлнă. Сюжет тăрăх, унăн сăнарне пистолетран пемелле пулнă. Ӳкерӳ ушкăнĕ асăрхаса çитереймен теççĕ – пистолет юсавсăр пулнă. Каччă хăйĕн туйĕччен 17 кун пурăнса çитерейменрен.

### Гиннесс



XVIII ĕмĕрте Артур Гиннесс пысăках мар сăра завочĕ уснă. Бизнес йĕркеллех аталанса пынă. Анчах та йăх пирки çакна калаймăн – Гиннесăн 21 ĕткерçинчен 10-шĕ пурнăçпа ирех сывпуллашнă. Завод хуçин кун-çулĕ татăлнă хыççăн унăн ĕткерçисен шăпи тĕрлĕрен аталаннă – пĕрисем çука юлнă, иккĕмĕшсем ăсран тайăлнă, виççĕмĕшсем ĕçке яраннă. Тĕнче иккĕмĕш вăрçи вăхăтĕнче Гиннессен тĕлĕшпе те йăх ылханĕ пирки калаçма пусланă. Çак тапхăрта вĕсен тата икĕ тăванне вĕлернĕ. Вилĕмсен шучĕ вăрçă шăв-шавĕ лăплансан та чарăнман. Автокатастрофа, наркотиксем, хăйсем çине алă хуни – çак сăлтава пула Гиннесс йăхĕ тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа чакнă.

**/Ledi.mail.ru/.**
**Сăнӳкерчĕксем: rex/Fotodom.ru, Legion-media.ru, Eastnews.ru.**

ТĔЛĔНТЕРМĔШ

# Икĕ чĕреллисем

**Этем организмĕ ăслăлăха тĕлĕнтерме пăрахмасть. Калăпăр, эсир хăçан та пулин икĕ чĕреллĕ çынсем пирки илтнĕ-и? Тĕрĕссипе, вĕсем çакна хăйсем те пĕлменха, мĕншĕн тесен нимĕнле чирпе те аптраманнипе тухтăр патне çӳремен.**

1905 çулта Америка хаçачĕсенче тĕлĕнмелле хыпар пичетленнĕ: Дурр ятлă платник хăй икĕ чĕреллине пĕлтернĕ. Кĕлеткине, хăй вилнĕ хыççăн, нумай укçа тӳлекене парса хăварассине каланă. Тухтăрсен ушкăнĕ ăна пурăннă чухнех 10000 доллар сĕннĕ, анчах та çакăншăн арçыннăн пĕр чĕрине кăларса илмешкĕн ирĕк памалла пулнă. Дурр хирĕçленĕ: ара, операци темĕнпе те вĕçленме пултарать вĕт.

Германи тата кăсăклăрах хыпарпа тĕлĕнтернĕ – 1844 çулта унта Джордж Липперт виçĕ урапа çуралнă. Липперт цирк артисчĕ пулнă. Сăмах май, çав циркра выртăс арçын ачи те выляна. Унăн пит-куçĕ, çăмпа хупланнăскер, йытă сăмсине аса илтернĕ. 1906 çулта Липперт вилсе кайнă. Унăн ӳтне касса пăхнă хыççăн арçын ĕмĕрĕпех икĕ чĕрепе çӳрени палăрнă. Никам та, çав шутра Джордж хăй те, çакна тĕшмĕртмен те.

Икĕ чĕреллĕ çынсем Раççейре те пурăннине калаççĕ: ял фельдшерĕ Владимир Огнивцев шăпах çакăн пеккисен йышĕнчен. Тĕлĕнтермĕш çинчен Екатеринбургра тухнă хирурги справочникĕнче каласа кăтартнă – унта Огнивцевăн организмĕнчи юн çаврăнăшне палăртнă.

### Пĕр пекех тапаççĕ

Аталанса пыракан медицина каярахпа çакăн йышши нумай çынна тупса палăртнă. 1967 çулта Югославире шкул ачисен сывлăхне тĕрĕсленĕ. Рамо Осман вĕренекенĕн сылтăм енче тепĕр чĕре тапни палăрнă. Рентген çакна çирĕплетнĕ. Икĕ чĕри те калăпăшĕпе пĕчĕк-мĕн, анчах та пĕр кĕвĕллĕн тапнине пула организмри юна чиперех хăвалаççĕ. Рамо тахçанах ӳссе çитнĕ. Унăн сывлăхне тухтăрсем тĕрĕслесех тăраççĕ. Арçын ыттисенчен урăх нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Тантăшĕсенчен сахалтарах ывăнать кăна.

2004 çулта çак феномен Грузи арçын ачин организмĕнче палăрнă. Унăн иккĕмĕш чĕри... хырăмра вырнаçнă.

2004 çултах Раççей МИХĕсем Игнушетире пурăнакан 47-ри арçын çинчен тĕнчене пĕлтернĕ. Зяудин Яндиев хăй вăхăтĕнче салтакра та пулнă-ха, анчах та медосмотра тухтăрсем çакна асăрхаман. 1999 çулта арçын йывăр чирленĕ хыççăн кăна тупăннă иккĕмĕш чĕре. 2004 çулта вара унăн инфаркт пулнă. Арçын пурнăçне иккĕмĕш чĕре те çăлса хăварайман. Тухтăрсем палăртнă тăрăх, унăн икĕ органĕ те пĕрре пек ĕçленĕ.

### Вăхăтлăх орган

Чĕре кусарса лартас операци питĕ сайра иртет. 1996 çулта Лондонра тĕнчипе паллă хирург Магди Якуб икĕ çулти Ханна Кларка иккĕмĕш чĕре парнеленĕ. Ханнăн хăйĕн чĕри калама çук ӳссе кайнине пула ĕçлесе çитереймен. Сылтăм енне донор чĕрине лартса парсан Ханна вунă çул чиперех пурăннă. Анчах та çакăн хыççăн унăн сывлăхĕ хăвăрт хавшанă – организм ют ӳт татăкне хăвалама пусланă. Тĕрĕслев çакна кăтартнă – трансплантант лартнă хыççăн Ханна тăван чĕри канса илнĕ, вăй пухнă, йĕркене кĕнĕ, малашне хăех ĕçлеме пултарать. Çапла вара донор чĕрине каялла кăларса илнĕ кăна.

### Юн шайĕнче

Иркутскра хĕрарăм икĕ чĕреллĕ ывăл çуратнă. Тухтăр пепкене больницăрах хăварма сĕннĕ – пурпĕр нумай пурăнаймĕ. Хĕрарăм итленĕ. Амăшĕ тăна кĕнĕ çĕре тухтăр ачапа пĕрлех çухалнă. Ун чухнехи самана кăткăслăхне шута илсе хĕрарăм право хуралĕсенчен пулăшу ыйтман. Анчах та пĕр вăхăтран çак çемьерех татах икĕ чĕреллĕ ача çуралнă, хальхинче – çӳлерех асăннă хĕрарăмăн йăмăкĕн.

### Улттăмĕш раса

Америка антропологĕ Сюзанна Качель икĕ чĕреллĕ çынсене нумай тĕпченĕ. Çак пулăма юн шайĕнчи астăвăмпа çыхăнтарать вăл. Икĕ чĕреллисем ытларах та ытларах çуралма пуçланине ытти ăсчахсем те палăртаççĕ. Çутçанталăк тăрăшнипе çĕр çинче улттăмĕш раса пусланса каясси не пĕлтерет-ши ку? Пулма та пултарать...

**("Esoreiter.ru").**




## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРŸСЕМ

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
**НА 3, 6-7 ЭТАЖАХ**
Дома печати. Справки по телефонам: 28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

**Уважаемые жители республики!**
**АО «Чурачикский завод ЖБИ»**
**предлагает ВАМ все виды железобетонных изделий необходимых в хозяйстве:**
**тротуарные плиты:** ПТП 60х80, ПП 50х100, П 21х1.5;
**колодезные кольца** диаметром КС-7-9, КС 10-2;
**кольца для канализации** КС 15-2;
**крышки на кольца** ПП 10-1-2Б, ПП 15-1-2Б;
**перемычки, столбы оград** 2ПБ16, 2ПБ19, 2ПБ 22, 2ПБ 25;
**треугольные столбы** ПС-3;
**фундаментные блоки** ФБС-3, ФБС-4, ФБС-5, ФБС-6.
Имеем возможность предоставить автотранспорт в любую точку страны по разумным ценам.
**Наш адрес:** Цивильский район, с.Чурачики, ул.Мелиораторов, 28.
**Телефоны:** 8 /835-45/ 60-0-93, 60-2-24, 60-0-66, 8-937-377-00-96.
**Действует гибкая система скидок!**
***Все для Вас! Торопитесь приобрести! Не опоздайте!***

### ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов** – маг, экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. **Т. 8-906-380-86-28.**

**38.Чистка колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.

**43.Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**51.Бурение колодцев. Кольца колодезные** замковые, качественные. Доставка. Скидки. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**53.Изготовление ЛЕСТНИЦЫ** /дуб, хвоя, береза/. Т. 89176623494.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

### СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС; **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой**.** Т. 8-961-339-33-63.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 8-905-346-56-71.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 8-917-675-75-28.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **кольца.** Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ керамзитобетонные.** Доставка. Манипулятор. Т. 89033220208.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**142.Окна – дёшево.** Т. 8-927-668-43-82.

**214.КЕРАМБЛОКИ** /40х20х20,40х12х20, 40х9х20/ пропаренные, вибропрессованные – недорого. Доставка. **Т. 8-917-677-68-46.**

**273.ПЕСОК, гравмассу, ДОСКИ, брус.** Д-ка. Дешево. Т. 8-960-306-32-54.

**750.БЫЧКОВ.** Д-ка. Т. 8-927-984-15-15.

### ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Тел. 8-962-599-47-06.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 89603109878.

**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 89677918905.

**694.Бычков, коров, тёлок, лошадей** – дорого. Т. 8-961-344-03-82.

**771.Дом, землю.** Тел. 21-04-45.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

52 çулти арçын хĕрарăмпа паллашасшăн. Т.89053470236.

* * *

72 çулти пĕччен арçын 68-72 çулсенчи хĕрарăмпа паллашасшăн. Т. 8-927-844-24-50.

## ☺И-ХИ-ХИК☺

Тин кăна ача çуратмалли çуртран илсе килнĕ шăпăрлан хăйĕн чĕлхипе пĕр чарăнми темĕн калаçнине итлекен Вовочка:

– Анне, вăл чăваш пулнине ĕненетĕн-и вара эсĕ? – тет.

* * *

Ача пĕчĕк чухне "хăвăртрах утса кайтăрччĕ" тесе ĕмĕтленетпĕр. Вăт, çитĕнчĕ, 18 çула çитрĕ, утса кайрĕ. Ăçталла кайнине калас тăк тата аванрах пулмалла та...

* * *

Аслă хĕрĕм 3 тата 4 çулти ачисемпе хăнана килчĕ. Кушак тӳрех вилнĕ пек пулса выртрĕ. Йытă ĕлкĕреймерĕ...

* * *

– Анне, юмахра сăнсăр чĕпĕ каярахпа хитре акăша çаврăнать. Чăн пурнăçра та çавăн пекех пулса иртет-и?

– Çук çав! – ассăн сывлать амăшĕ. – Санăн аçупа, сăмахран, пачах тепĕр майлă пулса иртрĕ.

* * *

Çыран хĕрринче виçĕ шапа ларнă. Вĕсенчен пĕри шыва сикме шухăшланă. Çыран хĕрринче миçе шапа юлнă?

Виççĕ. Палăртнипе пурнăçлани яланах тӳр килмеççĕ çав.

* * *

– Эсĕ халĕ сыр мĕн таран хакланнине пĕлетĕн-и-ха? – йывăç çинче тутлă çимĕç тытса ларакан ула курак тавра явăнать чее тилĕ.

* * *

Телевизорпа тин кăна пĕрремĕш класа кайнă хĕрачана кăтартаççĕ.

– Шкулта лайăхрах, – тет хайхи. – Унта çывăрма хистемеççĕ.

Мăнтарăн ачи, хăйне мĕн кĕтнине хальлĕхе чухламастьха вăл...

* * *

– Атте, мĕншĕн эпир яланах çĕрулми çиетпĕр, кӳршĕсем вара вĕçĕмех шашлăк ăшалаççĕ?

– Мĕншĕн тесен кахал вĕсем, çĕрулмие лартмалла вĕт, купаламалла, нăррипе кĕрешмелле...

* * *

– Вовочка, акă сана вуникĕ канфет, çуррине шăллуна пар.

– Юрать, эпĕ ăна виççĕшне парăп.

– Эсĕ мĕн, шутлама пĕлместĕн-им?

– Эпĕ пĕлетĕп-ха, шăллăм вара – çук.

* * *

– Эсĕ киле панă ĕçсене хăçан пурнăçлатăн?

– Фильм хыççăн.

– Фильм хыççăн кая юлатăн ĕнтĕ.

– Вĕренме нихăçан та кая мар.

* * *

Урамра икĕ арçын ача футболла вылять.

– Сирĕн хваттертен мĕнле шăв-шав илтĕнет? – ыйтать пĕри.

– Асаттепе атте мана математикăпа киле панă задачăсене шутлаççĕ, – хуравлать тепри.

## 42-45-мĕш номерсенче пичетленнĕ сăмах каçмăшсен хуравĕсем

1. Качака. 2. Архар. 3. Пурнăç. 4. Хушпу. 5. Тăхлан. 6. Атака. 7. Мулкач. 8. Флочĕ. 9. Какаду. 10. Арбат.

Çăлтăр тавра: 1-3. Карап. 3-5. Пруст. 5-7. Тĕтĕм. 7-9. Милĕк. 9-1. Курак.

* * *

СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Курка. 2. Арман. 4. Кĕрĕк. 5. Капан. 7. Атнер. 8. Роман.

АЯЛАЛЛА: 1. Курак. 2. Аслăк. 3. Наган. 4. Калта. 5. Кăвар. 6. Нулин.

ÇӲЛТЕН – АЯЛАЛЛА – СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Котик. 2. Аслан. 4. Кусар. 5. Камин.

ÇӲЛТЕН – АЯЛАЛЛА – СУЛАХАЯЛЛА: 2. Артек. 3. Налук. 5. Каска. 6. Нимĕр.

* * *

1. Капитан. 2. Тихонов. 3. Никитин. 4. Автокар. 5. Автомат. 6. Потанин. 7. Соломон. 8. Санитар. 9. Таракан. 10. Макаров. 11. Малинин. 12. Караван. 13. Саламат. 14. Калинин. 15. Сахаров. 16. «Капитал».

* * *

СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Пак. 4. Лав. 7. Арак. 9. Пура. 10. Тарас. 12. Артек. 13. Тара. 14. Сакс. 15. Палатка. 17. Гагат. 18. Каманин. 20. Урпа. 21. Икар. 23. Клодт. 24. Нубук. 26. Сана. 27. Мата. 28. Ира. 29. Тар.

АЯЛАЛЛА: 1. Пат. 2. Арат. 3. Карп. 4. Лутка. 5. Арес. 6. Вак. 8. Караганда. 9. Практикум. 11. Саламат. 12. Астанин. 18. Крона. 19. Набат. 20. Улар. 22. Рута. 23. Кси. 25. Кар.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ
4 627126 799869

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ
Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 02.12.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 6957. Заказ 4281.